41-309
1034
1044

Ф. Ҫитта

# Фронтри калавсем



Чăвашгосиздат
1941

Д1-309

Ф. ҪИТТА

# Фронтри калавсем



ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1941

№ 105.

## УМСĂМАХ

Çак кĕнекере ӳкерсе панă событисемпе çынсене автор пурне те пекех хăй куçĕпе курса ирттернĕ; калавсенчи геройсем—вĕсем писателĕн çапăçури çывăх юлташĕсем, тусĕсем.

Журналистсен Ленинградри институтĕнче илнĕ пĕлӳсем, унччен республикăри хаçатсенче ĕçлесе пухнă опыт Ф. Çитташăн фронтра уйрăмах усăллă та вырăнлă пулнă. Пирĕн Ленин хулине тапăнма пăхакан белофинсене çапса аркатас ĕçре Çитта юлташ пирвайхи кунсенчен пуçласах Хĕрлĕ Çарăн малти речĕсенче пынă. Вăл—политработник, боец-журналист.

Çар хаçатĕнче секретарь пулса ĕçлекен Çитта юлташăн, чи малти позицисене çитсе, çар корреспонденчĕсемпе çыхăнмалла, паянхи хаçат номерĕ валли материал организацилемелле, хаçатра чи хĕрӳллĕ çапăçусенчи паттăрсен ĕçĕсем çинчен каласа памалла, çав геройла примерсемпе боецсене хавхалантармалла. Çитта çăмăр пек тăкăнакан тăхлан айĕнче çӳрет. Малти позицисенче чи пархатарлă материалсем пухса хатĕрленĕ

хыççăн, каçхине вăл ерипен шуса, упаленсе тенĕ пек, редакцине 15—20 çухрăма каялла таврăнать. Çак ĕçре пĕрре кăна мар ăна вилĕмпе куçа-куçăн тăма лекет.

Ф. Çитта калавĕсем вĕсем чăннипех те фронтри калавсемпе очерксем пулса тăраççĕ. Вăл N дивизи хаçатĕнче çырса кăтартнă боецсенчен чылайĕшĕсем кайран Совет Союзĕн Геройĕсем, орденоносецсем пулаççĕ. Çапла вăл хаçатра разведчик Ульяновăн паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа парать. Халĕ ĕнтĕ Ульянов боец—пĕтĕм Совет Союзĕшĕн паллă Герой.

Çапăçу хирĕнчех Çитта юлташ коммунистсен парти ретне кĕрет. Коммунист, боец-журналист Федор Александрович Ситов юлташа Ленинград Çар Округĕн Военнăй Совечĕ фронтри хаçатра паттăрла ĕçленĕшĕн тав тăвать, грамота парать. Дивизи командованийĕ ăна ятлă сехет парса наградăлать.

Çак кĕнекене кĕртнĕ калавсем вулаканшăн литература тĕлĕшĕнчен пулса çитмен пек те туйăнма пултараççĕ. Анчах унти пысăк событисемпе чĕрĕ çынсем вулакана чăннипех те хумхантараççĕ, хавхалантараççĕ, çамрăксене çарпа вăрçă ĕçне вĕренме пулăшаççĕ.

Вĕсем пирĕн литературăра хăйсен пархатарлă та хисеплĕ вырăнне йышăнма тивĕçлĕ.

*А. Эсхель.*




Мал енчи сӗвекрех сӑрт ҫинче хыр вӑрманӗ кӑвакарать. Халь вӑл, шурӑ юрпа эрешленнӗскер, илемлӗн курӑнать. Тӗллӗн-тӗллӗн сӑрт ҫамкисем, ҫӳлелле каҫӑрӑлса, пӗлӗтелле кармашаҫҫӗ. Ҫутӑрах чухне ҫав шурӑ сӑрт ҫамкисем аякранах курӑнаҫҫӗ. Бинокльпе пӑхсан, вӗсен ҫийӗнче те, айлӑмӗсенче те хура пӑнчӑсем палӑраҫҫӗ. Анчах ку пӑнчӑсене кура, вӑл сӑрт таврашне финсем вырнаҫнӑ теме ҫук. Противник час-часах чееленме пӑхать, пире улталас тесе, суя позицисем туса хурать. Анчах пирӗн бо-

ецсене улталаймăн. Малтан вĕсем тăшман ăçта вырнаçнине тĕплĕн сăнаççĕ, тĕпчеççĕ, вара тин ун пуçĕ çине вут тăкма пуçлаççĕ.
Икĕ пысăк хыр хушшинче тăракан кĕçĕн командир Семин бинокльрен противник еннелле пăхма пуçларĕ. Чылайччен пăхса тăчĕ вăл. Унтан сасартăк хăй çине уртса янă шурă халатне майласа тăхăнчĕ те Назаров боеца чĕнсе илчĕ:
— Стереотруба витĕр N высотана тĕплĕн сăнăр, хăвăр мĕн асăрханине çырса пырăр,— терĕ вăл.
Назаров командир приказне пат татса тепĕр хут каларĕ те окопа кĕрсе кайрĕ.
Тарăн кĕрт тăрăх пĕр тĕме патĕнчен теприн патне пикенсех упаленме пуçларĕ Семин. Хырăмпа шусан-шусан, вăл сапаланса выртакан чул муклашкисем хушшине кĕрсе выртрĕ. Çĕр çумне выртса итлеме пуçларĕ. Нимĕн те илтĕнмест. „Апла пулин те, финсем пиртен аякра мар“, шухăшларĕ вăл. Пĕр пысăкрах чул тĕлне пытанса, чĕвен тăрса пăхрĕ. Сылтăмра, икĕ юман хушшинче, хĕлхем чăлтлатса илчĕ. „Аха, ав ăçта иккен эсир!“ терĕ вăл хăй ăшĕнче. Тăшман орудийĕ хăш тĕлтен пенине пĕлсен, Семин хавасланса илчĕ, сивĕпе кӳтнĕ аллисем çемçелсе кайрĕç, вара вăл, тарăн юра кушак пек чăрмаласа, каялла упаленме пуçларĕ.

Ун айĕнчи шăнса хытнă юр кăчăртататъ, çанталăк тем пек сивĕ пулин те, унăн сарлака çамки тарласа кайрĕ. Окопсем тĕлне çитсен, вăл хăлат çаннипе питне шăлса илчĕ те, оруди расчетне хăй патне чĕнчĕ.

— Юлташсем, вăхăт иртерме юрамасть, белофинсем пирĕн çине малти высота патĕнчен, сылтăм енчен пере ççĕ. Вĕсен орудийĕ икĕ юман хушшинче. Халех орудие вăтам лапамри тĕмеске патне вырнаçтарса, вут уçма хатĕрленĕр.

— Есть!—тесе честь пачĕ те наводчик Варава, расчета ертсе оруди патнелле упаленчĕ. Сергей Семин хăй йышăннă решение батарея командирне пĕлтерме чупрĕ.

Пĕр самантрах Варава, Назаров, Жигин тата тепĕр боец тупă кустăрмисене йĕлтĕрсем çине кӳртсе лартрĕç. Унтан, пĕшкĕне-пĕшкĕне, ура тапса туртма тытăнчĕç. Полковой оруди вырăнтан хускалчĕ. Халь ĕнтĕ вăл, йĕлтĕр çине лартнăскер, хăй тĕллĕнех каять темелле. Анчах тарăн юр çинче вăл путнăçемĕн путма пуçларĕ. Тăватă боец орудие лапама çитиччен алă вĕççĕн тенĕ пек йăтса кайма хăтланчĕç, анчах ĕç тухмарĕ. Вĕсене противник курчĕ пулас: кĕтмен çĕртенех расчет çывăхĕнче икĕ снаряд кĕрĕслетсе çурăлса кайрĕ. Артиллеристсем шарт сикрĕç, хăлхисене яра-яра илчĕç. Çав хушăрах команда

ЦНУ ЧАССР
Инвент. № 105.

панă сасă илтĕнсе кайрĕ: „Открыть ответный огонь!“ Алчăранă куç-пуççем ярах уçăлчĕç, вĕсем патне Семин чупса çитнĕ-мĕн. Юратнă командирăн уçă сасси ĕçе тытăнтарчĕ, тупă кĕпçине икĕ юман еннелле çавăрчĕç, икĕ боец пĕр ещĕк снаряд йăтса çитрĕç.

Çывăхра татах тăшман снарячĕсем шартлатса çурăлса кайрĕç. Хĕрсе ĕçе тытăннă расчет номерĕсем ăна сисмерĕç те темелле, пĕр Семин çеç: „час лăпланăн, шатăрмак“ тесе, снаряд ӳксе йĕр тунă юр çине пăхса илчĕ.

Унтан вăл хăюллăн та уççăн кăшкăрса, наводчик Варавана команда пачĕ, аллине тăсса ориентирсем кăтартрĕ, „виçĕ снарядпа çĕмĕрсе пăрах тăшман „трещоткине“, терĕ. Вася Варава тӳррĕн тĕлленĕ хыççăн оруди темиçе хут умлăн-хыçлăн печĕ те,—ну, мĕнле?—тесе ыйтрĕ бинокльпе пăхса тăракан командиртан.

— Молодец, прекратить огонь!—тавăрчĕ Семин.

Белофинсем пеме чарăнчĕç.

— Майлă лекрĕ пулас,—терĕ Варава.

— Мĕнле лекнине высотана илсен курăпăр, халь, гильзăсене пухăр та, орудие сулахайри позицие куçарăр!—приказ пачĕ командир.

Çав самантрах пирĕн сулахайри тупăсем вут тăкма пуçларĕç, вĕсем сăрт çине вырнаçнă противник пулеметчикĕсене ĕнтеççĕ мĕн. Хĕрĕх минут хушши сывлăшра хаяр сасă кĕрлесе тăчĕ. Пирĕн тупăсенчен пенĕ сасă çĕре кисрентерет, йывăççене пуç тайтарать. Вăл кĕрлев Семин расчечĕ çĕнĕ позицинче пеме пуçласан татах та вăйланчĕ, хулăмланчĕ. Лапамри пĕчĕк вăрманта артиллеристсемсĕр пуçне урăх нимĕнле чĕрчун та çук темелле,—вĕçенкайăксем сас памаççĕ, пакшасем турат çинчен турат çине сикмеççĕ, мулкачсем те йĕр туса çӳремеççĕ.

Тупăсенчен пеме чарăнсан, пехотинецсем „ура“ кăшкăрса высота çине атакăна кĕрсе кайрĕç. Вĕсене малалла кайма артиллеристсем пит лайăх çул уçса панă. Семин та хăй расчечĕпе, çĕнĕ позици йышăнас тесе, высотка çине васкарĕ. Юрлă сăрт çине пырса кĕрсен вĕсем сăрт айккинче ларакан икĕ ват юман патнелле васкарĕç.

— Акă, пăхса савăнăр хамăр тунă ĕç çине,—терĕ Сергей Васильевич, боецсене противникĕн ванчăк орудийĕ çине тĕллесе кăтартса.

Малтан пенĕ снаряд айккинерех ӳкнĕ, вăл ӳксенех белофинсен расчечĕ туппине пăрахса тарнă. Иккĕмĕш снаряд тупă кĕпçине салатса пăрахнă, виççĕмĕшĕ—кустăрма çумне

ӳксе ҫуралнӑ. Тӑшман орудинчен тимӗр татӑкӗсемпе хӑрах кустӑрми ҫеҫ юлнӑ. Артиллеристсем, тепӗр кустӑрми ӑҫта кайса кӗнине пӗлес тесе, унталла-кунталла пӑхкаласа илчӗҫ.

— Ванчӑкӗсем те ҫук-ҫке!—тӗлӗнсе ыйтрӗ хӑйӗнчен хӑй Варава.

— Ав, юман тураттн ҫинче ҫакӑнса тӑрать,—терӗ Семин.

Ӑна тӑвӑллӑ сывлӑш ҫӗклесе вӗҫтерсе янӑ пулнӑ та, вӑл вара, каялла ӳкнӗ чух, турат ҫине ҫакланса юлнӑ.

Варава тупӑ кӗпҫи ванчӑкӗсене алла илчӗ те:

— Командир юлташ, эсир „трещотка“ терӗр те, ку, ача, пысӑк калибрлӑ оруди пулнӑ,—терӗ.

— Лайӑх тӗллетӗн, Варава, питӗ маттур! Хӑрушӑ япала ку... Юрать вӑхӑтра ҫапса ватрӑмӑр,—терӗ командир.

— Вырӑс артиллерисчӗсем ӗлӗкренпех тӗл переҫҫӗ,—хушса хучӗ Василий Иванович.

— Ну, юрӗ, мухтанма иртерех-ха, ҫӗнӗ позицие йышӑнар,—терӗ Семин.

Вӑл хӑй боецӗсене высотаваррине ертсе кайрӗ.

* * *

Чикӗ урлӑ каҫнӑранпа иккӗмӗш расчет хӗрӳллӗ ҫапӑҫусенче ырми-канми паттӑрӑн

кĕрешрĕ. Унăн командирĕ Семин, наводчикĕ Варава орудирен тĕл персе чылай укреплениссене ватрĕç, арлан шăтăкĕ евĕрлĕ кукăрмакăр чавса пĕтернĕ çĕр айĕнчи блиндажсене сывлăшалла сирпĕте-сирпĕте ячĕç. Нумай хутчен вĕсем, тăшман патне икçĕр метра çывхарса, орудирен тӳрĕ наводкăпа пенĕ. Хăш чух тăшман пулемечĕсенчен вĕсем çине çумăр çунă пек пуля тăкăннă, ахальрен мар тупă кĕпçипе щитокĕ çинче çара шăйрăк çеç. Расчет номерĕсенчен пурте сывă-ха,— пĕри те аманман, ку ĕнтĕ Семина савăнтарать. Анчах нумаях пулмасть хĕрӳллĕ çапăçу пулса иртрĕ, çав çапăçу хыççăн орудие ремонта лартмалла пулчĕ. Фронтра яланах мастерскойсем çине шанса тăмалли çук ĕнтĕ. Çавăнпа та расчет орудие тыла илсе тухрĕ те, хăй вăйĕпех ремонтлама тытăнчĕ.

Йĕри-тавра хырлăх. Пĕлĕте çити ӳссе кайнă йывăççем хаяр сивĕпе шартлатаççĕ. Пăшалран пени илтĕнмест, тупăран пенĕ сасăсем çеç ӳлесе тăраççĕ. Хырлăха кĕрпеклĕ юр сырса илнĕ, ниçта нимĕнле йĕр те çук. Нумай пулмасть ку вырăнта хĕрӳллĕ çапăçу пынăччĕ; финсем, вăрман хӳттипе пытанса, пире хирĕç чылай перкелешнĕччĕ. Каярахпа пирĕн çар хĕснине чăтаймасăр, вĕсем ура тупанĕсене вĕлтлеттерсе тарчĕç.

Аслă хырлăх пирĕн алăра шутланать пу-

лйн те, лăпланса тăма ир-ха, противнйк часчасах бандитсен ушкăнĕсене лартса хăварать. Çавна шута илсе, Семин малтанах икĕ боеца хурала тăратрĕ, тупă çывăхне снарядсем хатĕрлесе хуртарчĕ, винтовкăсене авăрлама хушрĕ.

Орудие юсаса пĕтерсен, пурте çăвăнма шут тытрĕç. Çапăçу хирĕнче тар тусанĕпе тĕтĕмпе пит-куççем сăмалаланса кайнă, ӳтпӳ тарпа пиççе хытса ларнă.

Расчет номерĕсем, тăшман куçне курăнмалла мар пулас тесе, çемçе юра чавса пысăк шăтăк турĕç те, йывăç тураттисем пухса вут чĕртрĕç, котелоксене пусса юр тултарса, вучах çине ирĕлме лартрĕç.

— Ну, ларса канăр, юлташсем, тепĕр икĕ сехетрен татах вăрçа кĕретпĕр,—терĕ Семин, йăсăрланса çунакан вучах умне чĕркуçленсе. Лĕпленнĕ шывпа пичĕсене çурĕç те кĕпĕрленсе апата ларчĕç. Вут çинче ăшăтнă консерва банкисене уçса, çиме тытăнчĕç.

— В ружье!—хыттăн çухăрса ячĕ часовой. Пурте шарт сиксе тăчĕç те пĕр секунда хушшинчех тупă патне чупса тухрĕç.

— Мĕн пулнă?—ыйтрĕ Семин.

Часовой ответлеме те ĕлкĕреймерĕ, командир мĕн килсе тухнине хăех туйса илчĕ, пуç тăрринчех каскăн пульăсем ши! те ши! шăхăрма пуçларĕç. Расчет щиток хыçне пĕш-

кĕнчĕ. Семинпа Варава икĕ еннелле тимлĕн пăхса сăнама пуçларĕç, анчах нимĕн те курăнмасть, пульăсем çаплах шилетеççĕ-ха.

— Орудие—к бою, картечью заряжай!— шăппăн команда пачĕ Семин.

Расчет хĕрсе ĕçе тытăнчĕ, икĕ боец картечсем хатĕрлесе çитерчĕç, тупă замокĕ уçăлса хупăнчĕ...

Унччен те пулмарĕ, вăрмантан кăшкăр кĕтĕвĕ пек, белофинсен ушкăнĕ сиксе тухрĕ, вĕсем пур енчен те хăйсен чĕлхипе çуйăхса оруди патнелле кăшкăрса чупма пуçларĕç.

— Картечью огонь! —сивĕ сывлăша çурса кайрĕ командирăн уçă сасси.

Каланă—тунă. Расчет вут пек ĕçлет, тупă кĕпçинчен картечь хыççăн картечь сирпĕнет... Шăй-шай çуйăхма пуçларĕç финсем, хăшĕсем каялла тарма хăтланчĕç, анчах ĕлкĕреймерĕç, картечăн чĕлхи вăрăм, вĕсене вут хыпса илчĕ. Çапăçу пилĕк минута пычĕ, тупăран инçе те мар шурă юр хĕп-хĕрлĕ юнпа кĕвелчĕ, бандитсен виллисем вырта-вырта юлчĕç.

Сергей Семин, расчет тĕп-тĕрĕсех иккенне курсан, савăннипе çĕлĕкне юр çине çĕклесе çапрĕ, чи малтан Вася Варавăна ыталаса чуптурĕ.

— Кам çуратса янă сана çĕр çине, çиçĕм

пĕк ĕçлетĕн эс!—тĕсе, çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ.

— По местам, к орудию! — кăшкăрчĕ командир.

Пурте хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç. Семин васкаса донесени çырчĕ те Назарова штаба чуптарчĕ. Ыттисем тупă патĕнче, алăсене пăшал тытса, штабран приказ килессе кĕтсе юлчĕç.

* * *

Хырлăхри бандăна çĕмĕрсе тăкнăран вара чылай вăхăт иртрĕ. Ку хушăра иккĕмĕш расчет татах та пысăк çĕнтерӳсем турĕ. Вĕсенчен чи палли *N* кӳлĕри пăр çинче пулса иртнĕ çапăçу. Ĕмĕр манми çапăçу пулчĕ вăл.

Ун чух хĕл сиввисем иртсе пыратчĕç. Çур еннелле кайнă май, çанталăк та çемçелме пуçланăччĕ. Кӳлĕри пăр çине купаланса ларнă юр та куççулленсе сĕлкĕшленнĕччĕ.

Семин хăй орудине пар лаша кӳлсе кӳлĕ хĕррине турттарса пычĕ. Вĕсен пĕрремĕш расчетпа пĕрле кӳлĕ леш енне вырнаçнă белофинсен йăвине—В. поселока тупăсенчен персе çĕмĕрсе тăкмалла. Ку ответлă задачăна пурнăçлама маттур артиллеристсем вăхăтра çитрĕç.

Пысăк та сарлака кӳлĕ. Унăн леш енчи çыранĕ, ахаль пăхсан, пĕлĕт хĕрри евĕр çеç курăнать. Кӳлĕ варринче икĕ пĕчĕк утрав.

Çав утравсенчен пĕрин çине те пулин тухса тăрсан, тăшман позицине витĕрех курма пулать. Çавăнпа та Семин пĕр утравĕ çинче огневой позици йышăнма шут тытрĕ.

— Вперед!—терĕ вăл, пар лашана çавăтса пыракан красноармееца.

Лав хускалса кайрĕ. Ун хыççăн расчет номерĕсем чĕркуççи таран сĕлкĕшлĕ кӳлле кĕрсе кайрĕç. Кунта çитиччен нумай утнă пулин те, ывăнман-ха вĕсем. Ывăннă пулсан та, вăрçа кĕрес умĕн хăй ĕшеннине никам та палăртасшăн мар.

Çак вăхăтрах финсем минометсенчен пеме тытăнчĕç. Минăсем çывăхрах шартлатса çурăлма пуçларĕç. Семин расчечĕ кун пек вут айĕнче чылай пулкаласа курнă, çавăнпа та шикленни-туни пулмарĕ. Анчах инкек сиксе тухрĕ: пĕр аскăн мина пĕр сассăр вĕçсе килсе лав умĕнчех кĕрслетсе çурăлса кайрĕ. Осколкăсем лекнипе икĕ лаша ӳксе вилчĕ, тилхепе тытса пыракан красноармеец Разгуляевăн хăрах алли аманчĕ. Патмар юлташĕсем ăна, тупă хыçне вырттарса, суранне çыхрĕç те, çыраналла çавăтса утрĕç.

Семинпа Варава тупă патĕнче трактор килессе кĕтсе юлчĕç. Вĕсем противник минометĕнчен хăрами пулса çитнĕ ĕнтĕ. Мина хыççăн мина пырса ӳкет. Семин пĕр мина ӳкнине курать те, тепри хăш тĕле ӳкессе

тĕллесех кăтартать. Вăл тĕллесе кăтартнă çĕре минăсем ӳкни нумай пулнă. Паттăр Семин хăйĕн тавçăрулăхĕпе нумай боецсемпе командирсене тĕлĕнтерне. Анчах халь тавçăрса илме çук, минăсем çине çинех ӳкеççĕ: йĕри-таврари пăр чăнкăр та чанкăр туса сирпĕнсе тĕтĕмпе явăнать, усал минăсем аçа çапнă пек ӳксе çурăлаççĕ те хăлхана хупласа лартаççĕ. Семин расчечĕ питĕ пысăк йывăрлăха лекрĕ темелле: ни каялла, ни малалла кайма.

Ун телейне часах трактор кĕрлеттерсе çитрĕ. Юр çунă пек вут çăвакан вырăна паттăр тракторист тракторне илсе пырса тăратрĕ. Семин, Варава, Назаров, Жигин пурте пĕр харăс сиксе тăчĕç те орудие пăявпа трактортан кăкарчĕç. Тимĕр ут утрав еннелле тин çеç хускалнăччĕ, пăяв çурмаран пат татăлса кайрĕ. Ăна çĕнĕрен çыхма тесе, Жигин трактор патне упаленсе çитрĕ, пăяв таткине хăрах аллипе ярса илме çеç ĕлкĕрчĕ вăл, çывăхрах мина ӳксе çурăлчĕ, унăн осколкисем Жигина пĕр самантрах пăр çумне лапчăтса хучĕç. Семин ахлатса сиксе тăчĕ, Жигинăн юнлă питçăмартине чуптуса илчĕ те, ӳтне Варавăна тыттарчĕ, хăй çурмаран татăлнă пăявăн икĕ татăкне икĕ вăйлă аллипе тытрĕ те, тракториста, „вперед!“—терĕ. Трактор хускалса кайрĕ, йĕлтĕр çинче тăрса

пыракан Семин пĕр аллипе трактор çумĕнчи пăява, тепĕр аллипе тупă çумĕнчи пăява тытса явса илчĕ. Унăн паттăрла аллисем пăяв туртăннипе карăнса пынине курсан, пурте сÿçенсе илчĕç. Икĕ вăйлă ал сарлака хул калакĕсенчен мĕнле хăйпăнса тухмарĕ-ши? Мĕн тери вăйлă вăл, богатырь пек, улăп пек вăйлă! Минăсем çурăлни те, пăр хускални те, хĕл сивви касни те иксĕлтерейменеĕç унăн хăватлă вăйне.

Тимĕр ут часах сулахаялла пăрăнса утрав тĕлне пытанчĕ; белофинсем, ориентир çухатса, пеме чарăнчĕç. Иккĕмĕш расчет çыннисем часах хăйсен орудине тивĕçлĕ позицине вырнаçтарчĕç.

— Таварăтпăр, кăтартатпăр вĕсене,—терĕ Варава, çилпе куштăрканă питçăмартисем тăрăх юхакан вĕри куççулĕсене шăлса илсе.

Снаряд ещĕкĕсем çумĕнче вилнĕ герой Жигин ÿчĕ выртни ăна хурлантарчĕ. Паллах, Семинăн та куççулĕсем тухрĕç, анчах вăл хурланни тăшмана курайман çилĕпе, ăна çапса аркатас хастарлăхпа улшăнчĕ. Утрав çинчен белофинсен позицийĕсем янках курăнаççĕ; Семинпа Варава хăйсем каланине пурнăçлама пикенчĕç, пĕтĕм таврана чĕтретсе тупăран пеме пуçларĕç. Снаряд хыççăн снаряд вĕçме пуçларĕ тăшман пуçĕ çине.

— Ак сире пирĕн кучченеç, туянăр! —

хыттăн та уççăн кăшкăрчĕç икĕ герой, залп хыççăн залп парса.

Вĕсене ответлесе белофинсем нумаях переймерĕç, кĕçех вĕсен позицийĕсенче тĕтĕм мăкăрланма пуçларĕ.

Семинпа Варава çапах та пеме чарăнмарĕç, тăшмана хытăран хытăрах çунтарма тытăнчĕç. Вĕсемпе юнашар утрав çинче Белоусов расчечĕ кĕрлеттерме пуçларĕ. Белофинсен йăвине пĕтĕмпех вут хыпса илсен, батарея командирĕ Черешко, артиллеристсене чĕнсе илчĕ те, фронтри лару-тăрупа паллаштарчĕ.

— Сопротивление врага сломлено. Бросая убитых, раненых, пушки и другое вооружение, противник в беспорядке отступает. Наша задача непосредственно держать белофиннов под огнем и ударом, не дать им закрепиться на новых рубежах.

— Вперед, сыны отчизны!—кăшкăрчĕ юлашкинчен комбатр.

— Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн! Ура!— пĕр харăс кăшкăрса ячĕç артиллеристсем. Унтан пурте орудисем патне кайса, тин çеç тăшман пăрахса тарнă кўлĕ леш енчи В. поселокра çĕнĕ позицисем йышăнма хатĕрленчĕç.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Семин хăйĕн орудине тракторпа сĕтĕрттерсе поселока

персе те çитрĕ. Кунта кашни утăмра тенĕ пекех тĕрлĕ укрепленисем: çыран хĕррипе темиçе рет пралук карса тухнă, чултан купаласа хӳтлĕхсем тунă, кашни виçĕ метрта ДЗОТ-сем, блиндажсем пулнă. Сылтăмарах, ватă йăмрасем айĕнче, тункатасемпе хӳмесем хушшинче 122 калибрлă тăвата тупă ларса юлнă. Ку тупăсенчен противник пирĕн позицисем çине пеме çеç тытăннă пулнă, анчах пирĕн снарядсем кĕр-р-р кĕрлесе килме пуçласан, хĕрлĕ пехота çырана çывхарсан, вĕсем хăйсен тупписене çаплипех пăрахса тарнă. Ватă йăмрасем хыçĕнче чулран тунă сарай ларать, унăн калай витсе тунă тăррине снаряд лексе вĕçтерсе янă, сарай хыçĕнче тăватă нӳхреп пулнă, вĕсенче туллиех тар, юр ăшне чиксе ĕлкĕреймен авăрланă минăсем, фугассем пинĕ-пинĕпе купаланса выртаççĕ.

Пĕр пĕчĕк тирпейлĕ çуртра офицерсем ашкăнса пурăннă мĕн. Вĕсем пуçланă эрех кĕленчисене, закускисене сĕтел çинех пăрахса хăварнă. Çак пӳртрех белофинкăсен пурçăн кĕпи-йĕммисем сапаланса выртаççĕ.

— Ытла та ашкăнса пурăннă-çке,—теççĕ пирĕн боецсем, тăшманăн ирсĕр ĕçĕсене пăхса.

Сергей Семин поселока çитсенех хăй палăртнă ориентир тăрăх снарядсем ăçта ӳк-

нине пăхма кайрĕ. Вĕсем кунта та тĕл тивертнĕ, снарядсем блиндажсене, ДЗОТ-сене çамкаранах, амбразурсенченех лексе, никĕсĕмĕнĕпех пĕлĕтелле сирпĕтсе янă. Пĕр ДЗОТра икĕ „Максим“ пулемет ванчăкĕсемпе пĕрле белофинсен шăмми-шаккисем выртаççĕ. Вĕсем çĕрпе пăтрашăнса кайнă, юнпа кĕвелнĕ. Çаксене кăтартса Семин Варавăна хулĕнчен лăпкаса çапла каларĕ:

— Да, Василий Иванович, вырăс артиллерисчĕсем ĕлĕк те тĕл пенĕ, халĕ тата лайăхрах переççĕ, маттур эс!—терĕ.

Пирĕн авиаципе артиллери мĕнле хытă çĕмĕрни, вăйлă ĕçлени çинчен белофинсем те лайăх хак параççĕ. Белофинсен пĕр вилнĕ салтакĕн докуменчĕсем çумĕнче (вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех) çакнашкал çыру татки тупса вулама тĕл килнĕччĕ.

*„Хаклă аттем, вăрçă кашни кунах хаяррăн сарăлса пырать. Эпир çапăçура пулса курман-ха, анчах артиллери пирĕн çине перет. Иртнĕ каç питĕ вăйлă канонада пулчĕ, ун хыççăн хам мĕнле чĕрĕ юлнинчен тĕлĕнетĕп. Малтан москальсем артиллерирен печĕç, кăнтăрла пирĕн çине вĕсен самолечĕсем вĕçсе килчĕç. Пĕр самолечĕ çĕрçумĕнчен аякра мар вĕçрĕ. Самолетран пăрахнă бомба офицерсем пурăнакан*

*землянка ҫывăхĕнче ӳкрĕ те тăршшĕпе икĕ метр, сарлакĕшпе виҫĕ метр шăтăк турĕ. Ҫĕр кисренсе кайнипе, землянка алăкĕ хăйпăнса сывлăшалла сирпĕнсе кайрĕ, землянка урайне хăйăр анса тулчĕ.*

*Каҫхине, сакăр сехет тĕлнелле, татах артиллерирен пеме пуҫларĕҫ. Пирĕн ҫывăхра вăтăр снаряд ӳксе ҫурăлса, питĕ нумай сиен кӳчĕ. Ҫĕрле сехет те 30 минутра татах бомбăсем пăрахма пуҫларĕҫ. Пирĕнпе юнашар землянка сывлăша вĕҫсе кайрĕ. Хам пурнăҫра эпĕ пĕрремĕш хут хăраса куртăм, ирчченех чĕтресе ҫӳрерĕм.*

*Хăть Иисус каланă та,—ан хăрăр, эпĕ яланах сирĕнпе пĕрле—тесе, ҫапах, кашни ҫыншăнах хăй пурнăҫĕ хаклă, ҫапла, хăрамасăр чăтса тăраймарăм. Питĕ вăйлă канонада пулчĕ. Землянкăсем чĕтресе тăчĕҫ, мĕлтлетсе ҫунакан ҫурта та сӳнсе ларчĕ, пĕлместĕп, темле чĕрĕ юлтăм.*

*Вăю ҫитсен ҫăматă ярса пар, атăпа сивĕ. Кăнтăрла землянкăра кăмака хутма ҫук. Пĕрре эпир кăмака хутрăмăр. Шăп ҫав вăхăтра москальсен самолечĕсем вĕҫсе килчĕҫ. Кăмакари вутта сӳнтермелле пулчĕ, атту кăмакапа пĕрлех сывлăша вĕҫсе кайма лекетчĕ".*

Айван салтак çырăвĕ çак вырăнта татă-лать; шеремет, çыруне çырса пĕтеричченех сывлăша вĕççе кайнă мĕн.

* * *

Вăрçă пĕтсен, чылай вăхăт иртсен, ман Василий Иванович Варавăпа икĕ хутчен курса калаçма тĕл килчĕ. Вăл, ĕлĕкхи пекех, патмар та вашаватлă боец. Унăн сарлака кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ ялкăшать.

Паттăр артиллерист Вася Варава хăйĕн юратнă командирне Сергей Семина чĕререн аса илчĕ.

— Мирлĕ вĕренў пуçлансан ăна татах та пысăк ĕç пачĕç. Сергей Васильевич халь взвод командирĕ пулса ĕçлет,—терĕ вăл.

Çĕнĕ ĕçе Семин хавасланса йышăннă. Вăл çамрăк боецсене кĕске хушăрах тупăран, винтовкăран отлично пеме вĕрентсе çитернĕ. Пĕрре вăл тактика вĕренĕвĕнчен хăйĕн боецĕсене хаваслă юрăпа, çирĕп стройпа илсе таврăннă. Çул çинче ăна канцелярине кĕме хушнă.

„Мĕншĕн чĕнет-ши политрук?—шухăша кайнă Семин.—Йĕрке тăрăх, ĕç пĕтерсен, занятисем хыççăн çеç чĕнекенччĕ-çке. Халь ак, взвода ертсе пынă çĕртен чĕнчĕ. Чĕннĕ-тĕк, каяс пулать“. Взвода лагере илсе çитерсенех

вăл политрук патне чупнă. Христофоров ăна хирĕç тухса савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Политрук уйрăмăнах хаваслине курсан, Семин тĕлĕннĕ:—мĕне пĕлтерет-ши ку?—ыйтнă вăл хăйĕнчен хăй.

Политрук патне çирĕппĕн утса пынă та:

— Товарищ политрук, командир взвода Семин по вашему вызову явился,—тенĕ.

— Сире Мускавран çыру,—тăваткăл конверт тыттарнă ăна Христофоров.

— Мĕнле çыру ку? Мускавра ман пĕр паллакă çын та çук-çке?—тĕлĕннĕ Семин. Конверта уçсанах ун куçĕсене „Москва, Кремль", тесе çырнă сăмахсем алчăратса янă, савăннипе ун аллисем чĕтреме пуçланă. Çыруне вуласан, унăн савăнăç куççулĕсем йăрлатса тухнă, ăна Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ Горкин юлташ Совет Союзĕ Геройĕн грамотине, Ленин орденĕ тата „Золотая звезда" медаль илме Кремĕле пыма чĕннĕ.

— Эсĕ Мускавра паллакă çын çук тетĕн, сана Кремльре пĕлеççĕ, пĕтĕм çĕршыв паллать,—тенĕ политрук.

# Паттăр разведчик



Эпир белофинсем тин çеç пушатса хăварнă землянкăсем патне çитсе чарăнтăмăр. Хĕрлĕ Çар çĕмĕрсе пынине чăтаймасăр каялла чакакан тăшман пулемечĕсене пăшалĕсене тата патронлă ещĕкĕсене пăрахса тарнă.

Землянкăна кĕретпĕр. Кунта халĕ чи паттăр красноармеецсем разведкăна кайма хатĕрленеççĕ. Вĕсем хушшинче паллă разведчик Иван Михайлович Ульянов та пур. Вăл пире, çар хаçатĕнче ĕçлекенсене, хавассăнах йышăнса илчĕ. Эпир ăна СССР Верховный Совечĕн Указĕ пичетленнĕ хаçата патăмăр. Вăл Указ тăрăх ăна Совет Союзĕн Геройĕ тунă.

Пирӗн хушӑра хӗрӳллӗ калаҫу пуҫланса кайрӗ.

— Ман атте эпӗ ҫуралнӑ ҫулхине империализм вӑрҫинче вилнӗ. Унӑн пурнӑҫне капиталшӑн ҫӑтӑхса вӑрҫа тухнӑ патша йыттисем ҫӑтса янӑ. Акӑ эпӗ те халь фронтра кӗрешетӗп. Анчах манӑн кӗрешӳ, вӑйӑм, пурнӑҫӑм пӗтӗмпех халӑхшӑн, тӑван ҫӗршывшӑн,— тет Ульянов юлташ. Хӑйӗн пурнӑҫӗ ҫинчен каласа парса питӗ хумхантарчӗ вӑл пире.

Иван Михайлович вӑтам пӳллӗ, илемлӗ сӑн-питлӗ, вӑйпитти ҫын. Тӑлӑх пурнӑҫпа ӳссе ӑна пайтах хурапа шурра курма лекнӗ. Ача чухне вӑл беспризорник пулнӑ. Чылай асапланса ҫӳренӗ хыҫҫӑн, 1930 ҫулта вӑл, вунпилӗк ҫула ҫитнӗскер, парикмахерскине ученик пулса ӗҫлеме кӗрет. Кунта мастерсем валли шыв ӑшӑтать, савӑт-сапа ҫӑвать, урай шӑлать. Пӑртак пушансанах вӑл аллине бритва илет. Мастерсем ӑна бритвӑна мӗнле тытмаллине, мӗнле хӑйрамаллине вӗрентеҫҫӗ. Пурӑна-киле Иван Михайлович ҫӳҫ касма, сухал хырма вӗренсе ҫитет.

Кӗркунне 1939 ҫулта, Хӗрлӗ Ҫара тухса килес умӗн, вӑл Малая Вишера станцинче чи лайӑх парикмахерсенчен пӗри пулнӑ. Хӗрлӗ Ҫара та Иван Михайлович сухал хырмалли приборсене чиксех килет. Вӑл парикмахер иккенне пӗлсен, подразделени командирӗ

лейтенант Куликов ăна „Парикмахерская“ пуçлăхĕ тăвать. Землянкăра та, хирте те, вăрманта та Иван Ульянов сухал хырать. Боецсем ăçта—вăл унта. Аллине вăл пĕр пĕчĕк чемодан тытать те подразделенипе пĕрле похода каять, ученисенче пулать, пăшал пеме çӳрет. Перерыв вăхăтĕнче боецсем, командирсем ун патне хырăнма, çӳç кастарма пыраççĕ.

Пĕр канмалли кун умĕн вăл 70 çынна сухал хырса янă.

— Яка хыратăн, лайăх ĕçлетĕн,—чĕререн тав тунă ăна уншăн лейтенант Куликов.

— Хырасса хыратăп та-ха, анчах, чикĕ сывăхĕнче чашкăракан çĕлен-калтасене çĕмĕрме хускалса кайсан, манăн ку ĕçе пăрахас пулать,—тенĕ вăл командир тав тунине хирĕç.

— Ун чухне те хыратăн, тăшмана та хырас пулать-çке...

— Мĕнле апла?

— Çаплах. Анчах вĕсене бритвăпа мар, „кĕсъери артиллерипе“ хырăн эсĕ.

— Эпĕ „кĕсъери артиллерине“ пĕлсех çитейместĕп çав-ха.

— Вĕренетĕн, вăл йывăр ĕç мар.

Тепĕр кун каçхине Ульянова командир Куликов гранатăпа мĕнле усă курмаллине хăй

вӗрентнӗ. Ульянов виҫӗ граната ывӑтнӑ та, палӑртнӑ тӗлсене питӗ меллӗн лектернӗ.

Белофинсемпе вӑрҫӑ пуҫлансан, Ульянов пӗр сумка граната чиксе ҫӳренӗ.

— Парикмахер бритва вырӑнне граната чиксе ҫӳрет,—кулнӑ унран юлташӗсем.

— Ман алӑра граната та помазок пекех вылянать,—тавӑрнӑ Ульянов.

Пӗр ирхине вӗсем Николай Ивлев боецпа разведкӑна каякан отделенин головной дозорӗнче пынӑ. Вӗсен А. ялӗн тавращӗнче противник пуррипе ҫуккине пӗлмелле пулнӑ.

Ульяновӑн хӑлхисем ҫивчӗ, куҫӗсем витӗр кураҫҫӗ. Каҫхи тӗттӗмре те вӑл белофинсене лайӑх сӑнаса илет.

— Ложись!—шӑппӑн приказ парать вӑл юлташӗсене. Вӗсем пысӑк чул хыҫне кӗрсе выртаҫҫӗ. Пӗр бандичӗ вӗсем патне ҫывхарса пырать. Ульянов винтовкипе тӗллет те персе ӳкерет ӑна. Кӗтмен ҫӗртен ҫывӑхрах пӑшал сасси янтраса кайнине илтсен, белофинсем шарт сикеҫҫӗ.

— Часрах командира банда пурри ҫинчен пӗлтер,—тет Ульянов Ивлева. Ҫав вӑхӑтра вӑл ерипен бандитсем еннелле шӑвать... Ҫӗр тӗттӗм, анчах ҫивчӗ куҫлӑ Ульянов бандитсене лайӑх курать. Вӗсем кӗпӗрленсе, ҫуйӑхса пынӑ ҫӗре тӗмесем хушшипе упаленсе пырать те, вӑл бандитсем ҫинелле гра-

ната вăркăнтарать. Шăй-шай çуйăхаççĕ çĕленкалтасем. Нумайăшĕ вилсе выртаççĕ. Ыттисем аманса каялла упаленеççĕ.

— Тараймăр, ирсĕрсем!—пăшăлтататать Ульянов, банда юлашкийĕсем çине тепĕр граната ывăтса.

Пĕр çур çухрăм аяккарахра ял хĕрринче белофинсен тепĕр ушкăнĕ пулнă. Куликов хăй подразделенийĕпе çав ушкăна атакăлама пуçлать. Ульянов татах малта. Анчах, ял патне çывхарсан, урнă тăшмансем пулеметран вут тăкма пуçлаççĕ. Ульянов станковăй пулемет хăш вырăнта вырнаçнине сăнаса илет те, унталла тылран хырăмпа шуса кĕрет. Пĕр офицерпа унтерофицер пулеметран вĕççĕрхĕрсĕр персе выртаççĕ. Паттăр разведчик вĕсем патнелле хырăмпа шусаваскать. Унăн пĕр аллинче винтовка, тепринче граната.

Пулемет патне çитме 15 метр юлсан, вăл чĕркуçленет те гранатине наводчике тĕллесе ывăтать. Унччен те пулмасть, пулемет кĕпçи сывлăшалла сирпĕнсе каять, офицер пулемет аврине тытсах сăмсипе юр ăшне тăрăнса ӳкет, унтерофицер месерле çаврăнса ӳксе юн юхтарма пуçлать. Çав вăхăтра Куликов хăй подразделенийĕпе белофинсен ялне çавăрса илет.

Паттăр Ульянов хăй пурнăçĕшĕн шикленмесĕр, хăюллăн та теветкеллĕн çапăçса, пĕр

хутчен çеç мар, хаяр тăшмана çапса ватнă.

— Лайăх хыратăн, молодец! — тенĕ ăна хăйĕн командирĕ Куликов.

* * *

Вăрçă пĕтсен Иван Михайлович пирĕн редакцине кĕчĕ.

— Вĕренме каяс тетĕп. Мĕнле шкула кайма канаш паратăр эсир? — терĕ вăл. Эпир ăна:

— Çарпа политика училищине кайăр, политработник пулăр, — терĕмĕр.

Халь вăл Ленинградри çарпа политика училищинче вĕренет. Лайăх вĕреннĕшĕн ăна „Отличник РККА" ятлă значок панă. Ĕнерхи парикмахер — паян тăван çĕршывăн хисеплĕ Геройĕ.




Пĕр хĕрӳллĕ çапăçу хыççăн политрук Решетов савнă арăмĕнчен çыру илнĕ. Фронтра кашни çырăвах, ху паллана çынсем пĕлтернĕ хыпар та, питĕ хаклă. Паллах, мăшăр çырăвĕ тата та хаваслантарать, чĕрене çĕклентерет. Арăмĕ çыруне вуласа тухсан, Решетовăн çапăçура ĕшеннĕ ӳт-пĕвĕ çемçелсе кайнă, савăннипе питçăмартисем кĕçĕтме пуçланă. Ку çыру уншăн уйрăмăнах хавхалантаруллă та чĕрене савăнтаракан хыпар пулнă.

— Юратнă мăшăрăм! Текех чăтса пурăнаймастăп, халех санпа юнашар тăрса тăшманпа çапăçма фронта тухса пыратăп, — çак сăмахсемпе вĕçленĕ Лена Решетова хăй çыруне.

Арăмĕн патриотизмла шухăшсем çуралнă-

шăн политрук чунтан хĕпĕртенĕ, вăл часах командовани урлă ăна фронта илсе килме документсем туса янă та хăй çапăçăва тухса кайнă. Нумай та вăхăт иртмен—упăшки ĕç-лекен № полка Лена вĕçтерсе те çитнĕ.

— Пире пулăшма килтĕр апла? — ырă кă-мăлпа йышăннă ăна комиссар штабра.

— Мĕнпур вăйăма, кирлĕ пулсан пуçăма та тăван полк çĕнтерĕвĕсемшĕн пама хатĕр,— татăклă ответленĕ Лена. Вăл паян тесен паян тупăсем çĕр кисрентерсе перекен вырăна са-нитарка пулса ĕçлеме кайма килĕшнĕ.

Комиссар çамрăк патриотка медицина тех-никумĕнчен вĕренсе тухнăскер иккенне пĕлсен пит савăннă.

— Сире лекпом пулса ĕçлеме яратпăр,— тенĕ вăл ăна. Çакăн хыççăн Лена Решетова çĕнĕ те хисеплĕ ĕçе пуçăннă. Вăл хăйĕн яш-така пӳне тата та çепĕçĕн кăтартакан пур-çăн кĕпине, драпран çĕленĕ пальтоне, çӳлĕ кĕлеллĕ туфлисене хывса, кĕрĕк пиншак, ăшă çăматă, красноармеецсен гимнастеркине тă-хăнса янă. Унăн тăптăваткăл хитре питкуçне хĕрлĕ çăлтăрлă шлем тата та илемлетнĕ, ял-кăштарнă. Лена командирсем пекех кĕрĕк çинчен сарлака пиçиххи çыхнă, сылтăм енне револьвер, сулахай енне полевая сумка çак-са янă.

— Упăшка курсан паллаймĕ те ĕнтĕ мана,—

тенĕ вăл çар тумĕсем паракан кладовщике.

— Вăл паян каçпа тыла килмелле, тĕл пулсан паллатех, — лăплантарас шухăшпа сăмах хушнă вăрăм пÿллĕ красноармеец кладовщик.

Чăн та çапăçу хирĕнчен ывăнса килнĕ политрук çĕн сăн çапнă арăмне палласа та илеймен. Лена, упăшки килессе кĕтсе, хыр йывăççисем хушшинче кукăр-макăр авкаланса выртакан тумхахлă çул хĕрринче утса çÿренĕ. Çывăхрах пирĕн артиллери çĕр кисрентерсе тăшман çине пенĕ кĕрлевлĕ сасса илтлесе савăннă вăл. Ĕçе тытăниччен унăн юратнă упăшкипе курнăçса калаçас, канашлас кăмăлĕ пулнă. Çул çинче иртсе пыракан кашни боеца, командира вăл хăйĕн чакăр куçĕсемпе тинкерсе пăхнă, сăнанă.

Часах ăна хăй упăшкиех килнĕн туйăнса кайнă: мал енчен килекен мĕлке çывхарнăçемĕн çывхарнă.

— Тем тесен те çавă, ах чунăм, ылттăнăм, эсĕ-им? — кăшкăрса янă Лена. Политрук Решетов, аякранах çаврака куçĕсене вылятса пăхса, çĕнĕ кĕрĕк тăхăннă командир сăнлă хĕрарăма сăнама пуçланă, ун умĕнче хăй арăмĕ тăнине вăл тавçăрса илеймен.

— Ах, Леша, Леша, — тесе, Лена чупса пырса, упăшкин сарлака хулпуççийĕсенчен уртăннă. Вĕри юнлă, патмар чĕреллĕ икĕ

çамрăк пĕр-пĕрне хыттăн ыталаса илсе чуптунă.

— Ну, юрĕ, каласа пар мĕнле çитрĕн, атту ман васкамалла, — тенĕ политрук.

— Мĕнле пурăнатăн эсĕ кунта, чунăм, ăçта васкамалла тата? — ыйтнă унтан арăмĕ. Иккĕшĕ те пĕр-пĕрне ыйтусем панă, ответлеме пĕри те пуçăнайман.

— Ăçта каятăн эсĕ кĕçĕрех, Леша? — ыйтнă арăмĕ.

— Ăçта каясси паллă, çапăçăва ара...

— Эпĕ те, эпĕ те санпа пĕрлех пыратăп, санран юлмастăп...

— Эсĕ малтан тылра ĕçлеме хăнăхса çитха, санăн ĕçÿ унта мар, кунта пулмалла, — тĕллесе кăтартнă Решетов санчасть еннелле.

— Çук.. Çук... ан хăвар мана хăвăнтан, эпĕ санпа юнашар тăрса тăшман пуçне çапса ватма пырасшăн, илсе кай мана та, — ÿпкеленĕ çаплах Лена.

— Кунта килти мар, сана тылра ĕçлеме приказ панă — ĕçлетĕн, калаçса тăмалли çук ĕнтĕ, чунăм, — ĕнентернĕ политрук.

Çак каçхине тепĕр ик сехетрен вĕсен уйрăлма лекнĕ. Политрук Решетов малти позицине кайса красноармеецсемпе политинформаци ирттернĕ, лекпом Лена тылри боецсене пухса урана шăнтасран мĕнле сыхланасси çинчен каласа панă. Çакăн пек пуçланса

кайнă çамрăк патриоткăн фронтри пархатарлă ĕçĕ.

Пурăна-киле вăл малти позицисене çӳреме пуçланă. Кунта час-часах упăшкине тĕл пулнă, унпа пĕр-ик сăмах хушнă та, сылтăм хулĕ урлă медикаментсем тултарнă сумка çакса, вăрçă хирне тухса чупнă.

Малтанах Ленăшăн кунта çĕнни те хăрушши те нумай пулнă. Вăрмансенче, йӳçлĕхсенче, шырланкăсенче противник каркаласа хăварнă проволкăсем, гранит надолбисем, юр ăшĕнче шартлатса çурăлакан минăсем ăна çӳçентернĕ. Каярахпа, пирĕн пехотинецсем, танкистсем, саперсем вăл чăрмавсене мĕнле çĕмĕрсе малалла кайнине курсан, вăл хавхаланнă, хăюланнă, паттăрланнă. Боецсем ăçта, Лена та унта пулнă. Тупăсем кĕмсĕртетни те, финсен минисем кĕрслетсе çурăлни те, хăш чух тăшман пульлисем çăмăр пек çуни те ăна хăратман. Пĕрре Р. высотана илнĕ чух артиллерипе вăйлă пенĕ хыççăн пехота тăшман çине атакăна кĕрсе кайнă. Чăрсăр противник хăй позицийĕсене парасшăн мар йывăççем хыçĕнчен, блиндажсенчен, дотсенчен автоматпа, пулеметпа, минометпа вут тăкнă. „Ура“ кăшкăрса тăшман çине çĕмĕрсе кĕрекен хĕрлĕ богатырьсен хушшинче лекпом Лена Решетова та пулнă. Вăл хăй нагăнĕнчен тăшман еннелле персе боецсемпе пĕр-

ле высота ҫинелле упаленнӗ, утнӑ, чупнӑ... Кунтан инҫе мар ун упӑшки, политрук Решетов, боецсене ертсе малтан малалла, высота еннелле ыткӑннӑ. Ҫамрӑк мӑшӑрсен вутлӑ куҫӗсем пӗр-пӗрне курса паттӑрлӑх кӑварӗпе ҫуннӑ, хӗлхем пек ялкӑшакан куҫшӑрҫисем пӗр-пӗрне малтан мала кайма чӗннӗ. Вӗсен хушшинче тӑшман минисем шартлатса ҫурӑлнӑ, пуҫ тӑрринче аскӑн пульӑсем хаяррӑн шӑхӑрнӑ. Хӗрлӗ паттӑрсенчен кам аманса ӳкнӗ, Лена ӑна часах ачаш аллисемпе ыталаса илнӗ, сумкинчен медикаментсем кӑларса ун суранне ҫыхнӑ та малалла вӑрканнӑ. Вӑл хӑй полкӗпе пӗрле, упӑшкипе юнашар тӑрса высота ҫине кӗресшӗн пулнӑ. Малалла кайнисене хӑваласа ҫитес тесе пӗшкӗнсе чупса пынӑ чух, Лена хӑй упӑшки Леша юр ҫинче юн юхтарса выртнине курах кайнӑ.

„Ах!“ тесе ҫухӑрса янӑ та вӑл, часрах мӑшӑрӗ ҫумне кукленсе ларнӑ, „Леша, Леша!“ тесе темиҫе хутчен чӗннӗ. Тӑнсӑр выртакан политрук пӗр сӑмах та чӗнеймен. Лена ун суранне майласа ҫыхнӑ, ун чакӑр куҫӗсенчен вӗри куҫҫулӗсем шӑпӑртатса юхса, шартлама сивӗпе ҫавӑнтах шӑнса ларнӑ. Лена асне пӗр юрӑри:

„Если ранили друга, перевяжет подруга горячие раны его“—тенӗ сӑмахсем аса килҫе ӑна тата та хурлантарнӑ. Анчах вӑрҫӑ хи-

рӗнче хурланса тӑма вӑхӑт ҫук, Лена та, икӗ рет шур шӑлӗсене ҫыртса вӑхӑтлӑха хӑй хуйхине пусарнӑ та, ҫийӗнчи кӗрӗкне хывса юратнӑ мӑшӑрне чӗркенӗ, хыттӑн кӑшкӑрса санитарсене чӗнсе илнӗ. Икӗ санитар часах чупса пырса политрука носилка ҫине хурса илсе кайнӑ.

— Часрах сывал, чунӑм, вӑй ил, ҫирӗплен,—ыталаса чуптунӑ Лена чӗререн савнӑ упӑшкине. Унтан сумкине йӑтса малалла чупнӑ. Ӑна йывӑр шухӑшсем пусса илнӗ. „Тен, юлашки хут куртӑм пуль эп Лешӑна, е вилсе кайсан ҫул ҫинче... каялла ҫаврӑнас марши?..“ тем те шухӑшланӑ вӑл. Анчах малта тата та аманнисем пулнӑ, вӗсем те, упӑшки пекех, юр ҫинче юн юхтарса, пулӑшу кӗтсе выртнӑ. Тем пекех упӑшки патне каялла ҫаврӑнасшӑн чӗре ыратнӑ пулин те, Лена малаллах кайнӑ, тӑшман пульлишӑхӑрса вӗҫни те, минӑсем шартлатса ҫурӑлни те ӑна каялла таврайман.

— Вилсен те вилетӗп, упӑшка суранӗшӗн тӑшмана тавӑратӑп,—ҫак шухӑшсемпе вӑл татах хӗрлӗ паттӑрсен ретне тӑнӑ, тата икӗ суранланнӑ боеца пулӑшу панӑ, унтан медикаментсем чикнӗ сумкӑна винтовкӑпа улӑштарса хӑйӗн полкӗпе пӗрле высота ҫине „ура“ кӑшкӑрса кӗрсе кайнӑ. Урса кайса хирӗҫекен белофинсем пулемечӗсене, мино-

мечӗсене, йӗлтӗрӗсене пӑрахса тарнӑ. Тарма ӗлкӗрейменнисем блиндажсенче, дотсенче хӗрлисен вучӗ хыпса илнипе ҫаплипех ҫӗр ҫумне лӑпчӑнса выртнӑ.

— Ҫакӑ кирлӗ сире, ҫӗлен-калтасене,—тенӗ Лена, кашни шӑтӑкрах вилнӗ белофинсен ӳчӗсене курсан.

Упӑшки аманнӑ хыҫҫӑн унӑн тӑшмана курайманлӑхӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пынӑ. Ҫапӑҫу хыҫҫӑн кӗске кану парсан та вӑл пӗр вырӑнта ларса тӑма пӗлмен, унӑн ҫамрӑк чӗри, противнике хӑваласа ҫитсе, тӗпренех кӑкласа тӑкас ӗмӗтпе сиксе тапнӑ, вӑрканӑ.

Высотана тӗппипех алла илсен, Ленӑна комиссар чӗнсе илнӗ те каланӑ:

— Халех политрук Решетов сывлӑхне кайса пӗлӗр!

— Ҫапӑҫава халех каймалла мар-и-ха?—ыйтнӑ Лена.

— Ҫапӑҫава кайма ӗлкӗретӗр-ха, унччен кайса килетӗр,—йӑпатнӑ комиссар.

Тарӑн юра ашса, хӑвӑрттӑн сывласа, тин ҫеҫ ҫапӑҫу пулса иртнӗ уҫланкӑ урлӑ ҫил пек вӗҫнӗ лекпом санчасть еннелле. Палаткӑсенчен карса тунӑ „госпитале“ пырса кӗрсенех, операци тӑвакан сӗтел ҫинче Леша выртнине курнӑ вӑл. Паттӑр политрукӑн шурса кайнӑ ӳчӗсем, путса кӗнӗ куҫӗсем Ленӑна ҫӳҫентерсе янӑ.

— Чунăм, Леша, ылттăн мăшăрăм!—чĕннĕ Лена, политрукăн çамçелсе шăнса кайнă аллисене чăмăртаса. Анчах ĕмĕрлĕхе куçне хупнă Леша ăна хирĕç нимĕн те чĕнмен. Лена ура çинче тăнă çĕртех хытса кăвакарса кайнă. Юнашарти палаткăри пысăк куçлăх тăхăннă, кăвак çӳçлĕ, лутрарах тухтăр тухнă та Ленăна ачашласа:

— Тăванăм, йăмăкăм, лăпланăр, йĕрсе-хуйхăрса та ним тума та çук, ме акă вулăр Леша каласа хăварнă сăмахсене,—шурă халат кĕсъинчен хут татки кăларса тыттарнă вăл. Унта мĕнпурĕ те вунпилĕк сăмах çеç пулнă:

„Чунăм, Лена! Эпĕ тăван çĕршывăн телейлĕхĕшĕн вилетĕп, эсĕ те пуçна хĕрхенмесĕр тăшмана тавăр.

*Санăн Леша*“.

Лена, вăл хут таткине хытă чăмăртаса чĕри çумне тытнă та упăшкин кăвакарса кайнă çемçе тутисенчен вичĕ хут чуптуса, палаткăран тухса, высота еннелле чупнă. Вăл çитнĕ çĕре Решетов политрук пулса ĕçленĕ подразделенинче митинг пынă.

— Политрук вилĕмĕшĕн белофинсене тĕппипех пĕтеретпĕр!..

— Урнă кашкăрсене хăйсен дочĕсенчех пытаратпăр!—тесе вĕçленĕ митингра тухса калакан боецсемпе командирсем хăйсен сăмахĕсене.

Митингра политрук—геройӑн арӑмӗ хӑйӗн вичкӗн куҫӗсемпе ним чӗнми малалла пӑхса тӑнӑ. Тӑшмана курайман ҫилӗлӗхпе, тӑван упӑшки вилнӗ хуйхӑпа унӑн ҫавракка питҫӑмартисем пӗрре хӗрелнӗ, тепре шуралнӑ. Лена текех чӗнмесӗр чӑтса тӑрайман. Сивӗ ҫилпе вӗлкӗшсе тӑракан ука пек сарӑ ҫӳҫӗсене шлем айне майласа чикнӗ те вӑл, ҫинҫе те уҫӑ сасӑпа хӗрӳллӗ сӑмах калама пуҫланӑ:

— Тӑван боецсем! Пирӗн пуҫ ҫине ӳкнӗ пысӑк хуйха тӑшмана тӗпрен ҫапса ватнипе ҫеҫ ҫӑмӑллатма пулать. Эпӗ те сирӗнпе пӗрле малти рете тӑрса хӗрӳллӗ ҫапӑҫусене хам пуҫӑма хӗрхенмесӗр кӗретӗп. Умри задачӑсене пурнӑҫлассишӗн, айтӑр малалла! Малалла!

Сивӗ сывлӑша „ура" кӑшкӑрнӑ сасӑ ҫурса янӑ. Подразделени патмәр хастарлӑхпа тӑшмана атакӑлама хускалса кайнӑ. Боецсемпе пӗрле Лена та малти ретре тӑшман еннелле пӑшал пере-пере татах паттӑрӑн малалла упаленнӗ, утнӑ, чупнӑ...




Батальон командирĕ вырнаçнă землянкăна кĕтмен çĕртен пысăк пӳллĕ, яштака боец кĕрсе тăнă. Ун çиййĕнче ăшă куртка, çемçе çĕнĕ кăçатă, мулахай пулнă. Вăл, пăхма çамрăк пулсан та, çулĕпе вăтăралла пуснăскер темелле. Унăн питçăмартисем хĕрлĕ хăмач пек ялкăшнă, икĕ куç шăрçисем çĕмĕрт çырлине аса илтернĕ.

— Эпĕ снайпер,—тенĕ вăл комбата.

— Ну вара, мĕн каласшăн унпа, ăçтан килнĕ эсир, мĕншĕн йĕркеллĕ рапортламастăр?—сассине хăпартнă капитан Касимовский.

— Эпĕ Ленинградран, доброволец,—хăюллăн ответленĕ боец. Унтан вăл полк штабĕнчен парса янă хут таткине комбата тыттарнă.

— Аван, аван, питĕ лайăх, ларăр сак çине,— тĕллесе кăтартнă комбат хыр турачĕсенчен купаласа тунă „диван“ çине кăтартса. Çав вăхăтрах хăй йăлкăшса çунакан çурта еннелле пĕшкĕнсе штабран çырса янă ĕçлĕ хута вулама пуçланă.

— Батальон управленин ячейкинче ĕçлеме тивет сире, эпĕ ăçта—эсир те çавăнта пулатăр,—татăклă ответ панă ăна капитан, ĕçлĕ хута вуласа тухсан. Çапăçу вăхăтĕнче лайăх снайперсем командирсене тăшманран шанчăклă сыхлаççĕ. Çавăнпа та çирĕп сывлăхлă, хăюллă боец Ковкина комбат хăйпе пĕрле хăварма шут тытнă. Ăна вăл часах снайперсен винтовкине тупса панă.

Кирилл Ковкин çĕнĕ винтовкăна алла илнĕ те приборĕсене тĕрĕсленĕ, затворне шăлтшалт тутарса уçса хупнă. Вăл винтовка мĕнле пенине тĕрĕслеме шут тытнă.

— Мана мишеньсем кирлĕ, — ыйтнă вăл комбатран.

— Мĕн тума?—тĕлĕннĕ капитан.

— Винтовка мĕнле пенине тĕрĕслесшĕн эпĕ...

— Чи лайăх мишеньсем—белофинсем, ан-

чах тĕл перĕр,—хулпуççинчен лăпкаса йăпатнă комбат снайпера.

— Питĕ лайăх, çапăçура тĕрĕслĕп апла,— килĕшнĕ Ковкин.

* * *

Çинçе те вăрăм уçланкă. Уçланкăн ку енчи хыр вăрманĕнче—эпир, лешъенче—белофинсем. Противник çак уçланка пĕтĕмпех пралуксемпе карса пĕтернĕ, гранит надолбăсем лартса тултарнă, кашни утăмрах юр ăшне минăсем чиксе лартнă.

Кирилл Ковкина командир белофинсен снайперĕсене, наблюдателĕсене пĕтерме приказ панă. Вăл часах уçланкă еннелле хырăмпа шунă. Вăрман хĕрринчи пĕр хулăм йывăç тĕлне пырса выртать те снайпер хăйĕн вичкĕн куçĕсемпе тăшман позицийĕсене сăнама пуçлать. Ун патне комбат упаленсе шăвать.

— Ну, мĕнле, „мишеньсем“ пур-и?—ыйтать вăл унтан.

— Шăп, ан шавлăр!—пăшăлтатса калать Ковкин. Вăл çав вăхăтра питĕ майлă „мишень“ тупнă мĕн. Каркаланчăк пралуксем патне пирĕн позицине сăнама тесе пĕр белофинн хырăмпа шуса пынă. Ковкин ăна часах сăнаса илет те, майлăн тĕллесе курока ерипен пусать. Пĕр самантрах пăшал сасси вăрмана

çурса каять, снайперăн пульли белофинн çамкине çурса та пăрахать.

— Акă пăшалне тĕрĕслерĕн те, лайăх ĕçлетĕн—чĕререн юратса хулĕнчен лăпкать ăна комбат.

* * *

Ковкинăн паттăрла ĕçĕсем Маннергейм линине çĕмĕрсе тăкнă чух пуçланса каяççĕ. Касимовский батальонĕ вăл вăхăтра çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвать. Вĕсенчен чи палли—чуллă сăртра тăшмана çĕмĕрсе тăкни. Пĕр сĕм вăрманта чуллă сăртра батальон, тăшман подразделенийĕсене тĕпренех çĕмĕрсе тăкса, сăрт тăррине хĕрлĕ ялавсем лартать. Чуллă сăрт—питĕ паллă та кирлĕ стратегиллĕ вырăн пулнă. Çавăнпа та белофинсем çак сăрта каялла илесшĕн татах çапăçма шут тытнă. Вĕсем чееленсе красноармеецсене хирĕç контратакăна кĕме хăтланаççĕ. Белофинсем пур енчен те ушкăнăн-ушкăнăн тухса, батальон еннелле „Сдаемся, не стреляйте!“—тесе утаççĕ. Пирĕн боецсемпе командирсем тăшманăн чеелĕхĕпе хаярлăхне лайăх вĕренсе çитнĕ. „Сдаемся“ тенине хирĕç вĕсем „пăшалăрсене пăрахăр“,—тесе ответлеççĕ. Белофинсем çĕлĕкĕсене, каскисене, противогазĕсене юр çине çĕклесе çапаççĕ, айвансем мĕн хăтланнине пăхсан чăн та па-

рӑнаççӗ темелле, анчах ҫирсӗрсем винтовкисене, автомачӗсене пӑрахас вырӑнне тата хытӑрах чӑмӑртаса тытаççӗ.

— Огонь по врагу!—кӑшкӑрать Касимовский.

Вӑл вӑхӑтра Ковкин пӑшалне авӑрласа пӗр йывӑç хыçӗнче финсен офицерӗсене тӗллесех выртнӑ иккен. „Огонь" тенине илтсенех вӑл кӗрс! те кӗрс! тутарма пуçлать. Шӑп тӑваттӑ персе ярать вӑл тӑшман еннелле, унӑн кашни пульли тӗл лексе тӑватӑ белофина юр çине çӗклесе çапать. Унӑн куçӗ тӗлне лекнӗ пиллӗкмӗш белофинӗ тарма хӑтланать, анчах хӑтӑлаймасть, снайпер пульли ӑна та çитсе лекет.

Паллах, комбат „огонь" тесе кӑшкӑрсанах Ковкинпа пӗр харӑс пулеметчиксемпе стрелоксем те тӑшман çине вут тӑкма пуçлаççӗ. Улталас шутпа красноармеецсем çине çӑтӑхса килнӗ тӑшман урисене сӗтӗрсе аякка каяймасть: вӗсенчен нумайӑшӗ хыр вӑрманӗнче юн юхтарса юлаççӗ. Чӗрӗ юлнисем каялла чакса çӗнӗ позицисем йышӑнаççӗ.

Батальон каялла чакакан тӑшмана хӑваласа чылай малалла каять. Финсем, хӗлле те шӑнман лачака хӗррипе сапаланнӑ чул муклашкисем хыçне пытанса, пеме тытӑнаççӗ. Снайпер Ковкин аптраса тӑмасть. Икӗ пулеметчикпе пӗрле вӑл сӗлкӗшле лачака тӑрӑх хы-

рămпа шума пуçлать. Паллах, ун çанçурăмне витĕрех нÿр витет, анчах çулăмлă патриот ăна пăхмасть, вăл хырăм çинче шунăçемĕн малалла шăвать. Белофинсем те сывăрмаççĕ, вĕсем снайпер çине çăмăр çунă пек пуля тăкаççĕ. Унăн противогазне, шинелне, ранецне витĕрех темиçе пуля шăтарса тухать. Вăл мĕнле чĕрĕ юлнинчен чăннипех тĕлĕнмелле.

— Эпĕ лачакари кашни тĕмеске тĕлĕнче пуçа чиксе выртрăм, противник пеме чарăнсан вĕсем çине хам пеме тытăнтăм,—каласа кăтартать Ковкин. Тĕмеске хыçĕнче лăпланса выртнă чух та унăн вичкĕн куçĕсем тăшмана сăнама чарăнман. Вăл нимрен ытла пĕр пысăк уссиллĕ офицера хытă сăнанă. Май килнĕ чух Ковкин ăна меллĕ тĕллесе çапса та ÿкерет. Пысăк усиллĕ офицера çăлма тесе икĕ унтер-офицер чупса пыраççĕ. Паттăр снайпер вĕсене те персе ÿкерет. Унăн паттăрлăхне кура пулеметчиксем тăшман çине хĕрсе вут тăкма пуçлаççĕ. Белофинсем ура тупанĕсене вут тивнĕ пек каялла тараççĕ. Батальон ура çине сиксе тăрать, тăшмана хăваласа çитсе перет, штыкпа чикет, унăн дочĕсене туртса илет.

Снайпер Ковкин, Маннергейм линине çĕмĕрсе тăкма пуçласан, виçĕ эрне хушшинче 17 белофина вĕлерни çинчен çар хаçатĕнче

ятарласа статья çырнăччĕ. Вăрçă пĕтиччен ăна урăх тĕл пулса калаçма лекмерĕ. Мартăн 23-мĕшĕнче (ун чухне вăрçă пĕтнĕ ĕнтĕ) эпир Ленинграда таврăнтăмăр. Маршпа утса пынă чух пысăк привал тусан ăнсăртран Ковкина тĕл пултăмăр.

— Миçе белофина шаккарăн? — ыйтрăмăр унтан.

— Вăтăр ытла,—савăнăçлăн тавăрчĕ вăл.

— Молодец,—тивĕçлипе мухтарăмăр ăна.

— Ленинграда çитсенех эпĕ Мускава, Кремле орден илме каятăп, таврăнсан ман пата хăнана кĕрĕр,—кăмăллăн чĕнчĕ Ковкин.

Пире аван мар пек туйăнчĕ. Фронтра эпир унăн паттăрлăхĕ çинчен нумай çырнă, анчах вăрçăччен вăл ăçта ĕçленине пĕрре те асăнман. Халь те пулин вăл мĕнле ĕçре ĕçленине пĕлес тесе эпир унтан пĕр именмесĕрех ыйтрăмăр. Кирилл Ковкин пире фронта пыриччен Ленинградри Кировски универмагăн коммерчески директорĕ пулса ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Вăл вăрçа кайиччен Хĕрлĕ Çарта та пулса курман мĕн. Ковкин, Осоавиахим членĕнче тăрса активлă ĕçлесе, пăшалпа тĕл пеме вĕренсе çитнĕ. Çав майпа та вăл, белофинсене çĕмĕрнĕ чух хăй пĕр айăп курмасăр, тăшмансене вуншарăн персе вĕлерме ĕлкĕрнĕ.



# Разведкăра

*(РАЗВЕДЧИК ДАРВИН КАЛАСА ПАНИНЧЕН)*

Сивĕ те хаяр хĕллехи каç. Пĕр хĕрӳллĕ çапăçу хыççăн эпир маршпа малалла утрă-мăр. Çĕр тĕттĕм, куçран йĕппе чиксен те курăнмасть. Тумхахлă йывăр çул. Утăм ярса пусмассерен урана темскер çыхланать. Такăн-са ӳкетĕн те сиксе тăрса татах малалла ута-тăн. Темчул утсан та çулăн вĕçне тухассăн туйăнмасть. Вĕççĕр-хĕрсĕр вăрман, йӳçлĕх, ла-чака... Çанталăк сивĕ те йĕпе. Йӳçлĕх вы-рăнта тин çеç çĕр питне пусса илнĕ шурă юр ирĕлсех пырать. Атă кунчисем сĕлкĕш ăшне путса лачăртатаççĕ.

— Шăппăнрах, урăрсене çĕклерех пусăр,— асăрхаттарчĕ пире командир. Вăл тем пек ывăннă пулин те малта васкаса утать. Унтан татăлса юласшăн мар урасене чух сĕтĕрсе эпир те малаллах шăватпăр.

— Стой!—терĕ командир. Чĕресем лаштă-рах кайрĕç.

— Тинех канса илетпĕр ĕнтĕ,—терĕ пĕри хыçалта.

— Кам мăкăртатать унта, канма вăхăт çук халь,—тавăрчĕ ăна лейтенант.

— Дарвин, ко мне,—чĕнсе илчĕ вăл мана. Унтан ориентирсем кăтартса разведкăна кайма приказ пачĕ.

— Противникăн пĕчĕк ушкăнĕсене тĕл пулсан плена илĕр, пысăк ушкăнĕсене тĕл пулсан, сас ан парăр, пытанăр, эпир вĕсене кунта мунча кўртĕпĕр... Кунтан виççĕр метрта йĕплĕ пралук картисем пур, кашни картара хачăпа касса виçĕ шăтăк тăвăр, наступленине каймалла пулсан чăрмав ан пултăр... Кĕскен те татăклăн пат татса приказ пачĕ взвод командирĕ—лейтенант. Унăн кашни сăмахĕ мана хĕрўлентерчĕ, хавхалантарчĕ. Темиçе каç çывăрмасăр хупăнакан куçсем уçăлса кай-рĕç, çилпе тарпа куштăрканă питçăмартисем пĕçерсе илчĕç. Хампа пĕрле кайма эпĕ тĕ-реклĕ те чăтăмлă тăватă боеца суйласа ил-тĕм.

— Аставăр, ачасем, умра пысăк ĕç тăрать, вилĕм е пурнăç,—асăрхаттартăм эп вĕсене.

— Пĕрремĕш хут мар, отделенный юлташ, шикленместпĕр,—терĕ ыйхăллă куçĕсене шинель çаннипе шăлса илсе Шагин.

Йĕрке тăрăх кунашкал ответлă разведкăна каннă хыççăн, пăртак вăй илсе патмарлансан çеç каймалла. Халь канса тăма вăхăт çук. Финсем кашни кун хаярланса, пуççăрлансах пыраççĕ. Çитменнине пирĕн тыла вĕсем бандитсен шайккисене яма пуçларĕç. Çавăнпа та пирĕн командовани вĕсене çине тăрсах умри Р. укрепленинчен шăлса тăкма приказ панă. Пирĕншĕн командир приказĕ—закон. Тем пек йывăр пулсан та, куçа вилĕм çывхарса килсен те ăна пурнăçласах пулать. Ун пек чух присягăна аса илетĕн те шăнăра хытаратăн, çирĕпленетĕн, унтан татах малалла утатăн. Эпĕ те хам отделение ертсе, яштака йывăçсем хушшипе çул тытрăм. Шăнса хытса кайнă хыр тураттисем пите лексе чăрмалаççĕ. Вăл лăсăллă тĕмеленсе ӳсекен пĕчĕк чăрăшсем çын мĕлки евĕр курăнса, куçа иккĕлентереççĕ. Вĕсене куратăн та чарăнса, тинкерсе ] пăхатăн: умра çутă вăрăм çĕççине çĕклесе усал фин тăнăнах туйăнать. Кашни кӳтнĕ алăсемпе винтовкăсене хытăрах чăмăртатпăр, вăл ку пулас

пулсан, тăшмана штыкпа чиксе пăрахма хатĕрленетпĕр.

Акă вăрман хĕрринчи пĕр пĕчĕк сăрт çамкине çитсе тухрăмăр. Ниепле инкек-синкек те пулмарĕ-ха. Пиртен инçе мар тăшман позицийĕсем. Йĕплĕ пралук карта юписем пăртак палăраççĕ. Çумри кĕске кĕреçесене чехолсенчен кăларса окопсем чавма пикенетпĕр. Вăл-ку пулас пулсан кунта оборона тума майлă вырăн. Эпĕ окоп чавнă майăн шухăшлатăп: пралук картасенче шăтăксем тума икĕ боецпа пĕрле хамăн каяс, виçĕ боеца эпир ĕçленĕ чух противник килсе тухасран сыхлама хăварас.

Малта тĕксĕм вăрман,—унта çĕлен-калтасем чашкăраççĕ. Вăрман умĕнче айлăм вырăн, вăл вырăна пĕтĕмпех пралуксемпе урлă-пирлĕ каркаласа пĕтерне.

Окопа мĕнчул тарăн чаван, çавăн чул нӳрлĕ тăпра хăйпăнса тухать. Сывлăш тата та нӳрленет, пăнтăхнă нӳхрепри пек йывăр шăршă кĕнĕн туйăнать. Çĕр çинче нумай выртма çук, сивĕ нӳрлĕх шăмшака витĕрех витет. Тарпа, çĕр нӳрлĕхĕпе шăршăннă тумтир часах шăнса хытать. Хаяр сивĕ тумтир айне персе кĕрет, ӳпке-пĕвер, ăшчик пĕрре вĕриленет, тепре пăрланнă пек хытса каять. Юн тымарĕсем тăрăх çуткĕмĕл чупнă пек, ӳт-пӳ çӳçенет, ху çине йывăр япала хунă пек шăм-

шак йывӑрланать, кӑшӑлпа хӗснӗ пек пуҫ ыратать. Куҫ хӑрпӑхӗсем ҫаплах хупӑнасшӑн пусӑрӑнаҫҫӗ. Куҫ умӗнче кино ленти шуса иртнӗ пек, пуҫра шухӑшсем выляҫҫӗ. Ах, пӑртаках вут хурса ӑшӑнасчӗ... Ҫири тумтире хывса типӗтесчӗ... Вӗри чей ӗҫсе шӑмшака лӑшах ярасчӗ...

Сӗлкӗшленме тытӑннӑ окопра выртса эпӗ шӑнса хытма пуҫлатӑп. Йывӑр ыйхӑ мана пуснӑҫемӗн пусать. Тӑван анне «ҫывӑр ывӑлӑм, ҫывӑр», тенӗн туйӑнать. Ытла та усалҫке Суоми ҫӗршывӗ... Эпӗ часах ӑнкарса илетӗп: тата пӑртак выртсан эпир е шӑнса хытатпӑр, е ҫывӑрса каятпӑр.

— Ползком, вперед! — тетӗп эпӗ хуллен.

Питӗ асӑрханса, пурте малалла тинкерсе пӑхса, пӗр сас кӑларми, хырӑмпа шӑватпӑр. Пӗр патмар чӗре ҫеҫ хыттӑн та хӑвӑрттӑн тапать. Вӑл хӑйӗн патвар таппипе шинель арки сӗлкӗшлӗ юра кӑчӑртаттарнӑ сасса хупланӑн туйӑнать.

Кӗтмен ҫӗртен эпӗ пӗр шӑтӑка пуҫ хӗрлӗ кӗрсе ӳкетӗп. Мӗн пулчӗ, ӑҫта эпӗ, ҫӑлӑр мана, — кӑшкӑрас килсе кайрӗ манӑн, кӑшкӑрма юрамасть. Мур шӑтӑкӗ пысӑк тата! Сылтӑмалла, сулахаялла сӑнаса пӑхатӑп та эпӗ танка хирӗҫ тунӑ лакӑма кӗрсе ӳкнине туйса илетӗп. Ун виҫине чухлатӑп та упаленсе тухатӑп. Татах шӑватӑп. Вӑхӑт хӑвӑрт иртет...

Ун ҫинчен чӗре систерет. Чӗре таппи секунда стрелкинчен те васкавлӑ.

Акӑ пралук... Мӗнпурӗултӑ рет. Пысӑк тимӗр хачӑсемпе ӑна ҫырттарса илетпӗр те кӑчӑрт... кӑчӑрт касатпӑр. Пӗр вырӑнта икшерӗн касатпӑр, ӳт-пӳпе пралук карта витӗр тухмалӑх виҫӗ шӑтӑк тӑватпӑр. Хачча пралук хыптариччен кашни мӗн касмаллине хыпашласа пӑхать. Тӗттӗм ҫӗрте йӗплӗ пралука хыпашланӑ май ман алла ҫинҫе яка пралук лекех кайрӗ. Ҫӳҫпуҫ вирелле тӑчӗ, ҫамка ҫине сивӗ тар сиксе тухрӗ. Сисетӗп, манран инҫе мар фугас выртать. Хуллен, сывлайми пулса кайса хыпашлатӑп та ун взрывательне фугасран уйӑратӑп. Ах шеремет, е вӑл кӗрслетсе ҫурӑлса кайнӑ пулсан, хамӑр та ҫӗрпе хутшӑнса каяттӑмӑр.

— Асӑрханса ӗҫлӗр, юлташсем, лайӑхрах хыпашлӑр, минӑпа фугасран сыхланӑр,— систеретӗп боецсене.

Ултӑ ретлӗ пралукӑн юлашки картине касса ҫеҫ пӗтернӗччӗ, сивӗ сывлӑшра белофинсен пулеметӗнчен пенӗ сасӑ кӗрлесе те кайрӗ. Эпӗ сӑмсапа сухаласа юр ӑшне кӗрсе кайрӑм. Пӗлӗте ҫутатса вӗҫекен пульӑсем аялтан аялалла анма пуҫларӗҫ. Эпӗ шалтан шалалла юр ӑшне чӑрмаланса пуҫа чикетӗп. Анчах касхи сивӗпе хытса шӑнма пуҫланӑ тӑпра сӑмса-ҫӑвара лекет, малалла чаваланса

кӗме ҫук. Хам айран шинель аркисене туртса кăларатăп, урасемпе тапкаланса ҫӗр ăшнелле пусăрăнма тăрăшатăп. Ман ҫинче ранецпа ун ҫумне ҫыхнă тăхлан котелок тӗве курпунӗ пек мăкăрăлса тăраҫҫӗ. Тăшман пулеметчикӗсем тӳпене ракетăсемпе ҫутатаҫҫӗ те пӗр чарăнми переҫҫӗ. Эпӗ хамăн боецсенчен малалла шуса кайса пӗр тӗме ҫине тухса выртнă мӗн. Белофинсем мана питӗ лайăх кураҫҫӗ, ҫавăнпа та ман котелокпа ранеца ҫумăр ҫунă пек пулькăсем шăйăрашăйăра каяҫҫӗ.

Тăшман кашни пемессерен манăн ӳт-пӳ пӗҫерсе каять, ҫамка ҫине сивӗ тар сиксе тухать, ҫавăнтах сивӗ сывлăш ҫӳҫентерсе ярать.

Тӳпери пӗлӗт таткисем пӗр ҫӗрелле капланаҫҫӗ. Вӗсен хушшинче ҫурма уйăх куҫне хӗссе пăхма хăтланать. Ку ир ҫывхарса килни ҫинчен пӗлтерет. Тăшман пулеметчикӗ эпӗ пӗр хускалми выртнине кура пеме чарăнать. Вăл хăйӗн вутне манран ҫӗр метрта юр ăшне кӗрсе выртнă Седов боец ҫине куҫарать. Тул ҫутăлса килнӗ май эпӗ вăл усалтӗсел ăҫтан пенине сăнама тăрăшатăп, хуллен тăват уран чӗвен тăрса винтовкăна чăмăртаса тытатăп. Лайăхах куратăп, умри хыр вăрман хӗрринче пулеметран пенӗ вут чӗлхи йăлт тăвать. Шăнса кӳпченӗ алăсене вӗрсе

çемçетсе пăшала хытăрах тытса тăшман еннелле тĕллетĕп, ерипен курока пусатăп. Кĕ-р-р çурса каять ирхи таврана ман пăшал сасси.

Эпир хамăр умма лартнă задачăна пурнăçланă. Пралук картасенче шăтăксем тунă. Вуншар минăсемпе фугассем туртса кăларса сиенсĕрлетнĕ.

— Отходить,—команда паратăп эпĕ. Хам хырăмпа каялла шăватăп. Манăн боецсем те ерипен шăваççĕ. Тăшман пулемечĕ шарламасть. Манăн пĕрре персе янă пăшал сассиех лăплантарчĕ-ши вĕсене,—шухăшлатăп хам.

Ирхине, тăм илнĕ ал-урасене мазьпа сĕрнĕ хыççăн эпĕ ăшă та пăчă землянкăра сăпкари ача пек исленсе çывăрнă. Вăл вăхăтра, эпир разведкăра палăртнă тăшман позицисене пирĕн артиллеристсем çĕр кисрентерсе тупăран персе салатнă. Пирĕн штаб начальникĕ, эпир илсе килнĕ сведенисем тăрăх, пралук картисем, фугас линисем, „противотанковый ровсем“ ăçта вырнаçнине картă çине йĕрлесе палăртнă. Кунтах, землянкăра, манпа разведкăра пулнă юлташсем рота командирне боевой задачăна пурнăçлани çинчен каласа панă.



# Хисеплĕ пăшал

Казармăра çутă та таса. Йĕркипе тимĕр койкăсем лартса тухнă. Вĕсем çинче çĕнĕ одеялсем, таса простыньсем, тăваткăл питшăллисем. Кашни койка патĕнчех табуретка, тумбочка. Сылтăмри кĕтесре винтовкăсем тăратмалли пирамида.

Кĕтесре Сантăр Иванов. Вăл çаннисене тавăрсах типĕ тутăр татăкĕпе хăй винтовкине сăтăрать. Вăл Çара килни вунă кун çеç-ха. Паян ăна пăшал панă. Çавăнпа Сантăр савăнăçлă. Пăшал кĕпçине сăтăрса пĕтерсен, вăл винтовкине çавăркаласа пăхма пуçларĕ. Хăй пăшалĕн йывăç пайĕсенчи путăк вырăнсене, шăйрăксене курсан, Сантăр пирамида çинчи ытти винтовкăсем çине пăхса илчĕ. Ăна ытти винтовкăсем çĕнĕ те çутă пулни, хăйне

пана пăшал çеç кивĕ те шăйрăкки иккĕлентерме пуçларĕ.

— Мĕнле-ха капла, командир мана, эс вунă кун хушшинчех çар службине юратнине палăртрăн, тесе мухтарĕ, а хăйсем—кивĕ пăшал панă,—шухăшласа илчĕ вăл. Винтовкине тепĕртак сăтăркаларĕ те пирамида çине таянтарса тăратрĕ. Тарăн шухăша путнă Сантăр „Ленин пўлĕмне“ кĕчĕ. Кунта унăн юлташĕсем шашкăлла, шахмăтла выляççĕ, кулаççĕ.

— Сантăр, эсĕ мĕн çаплах пăшалăнтан уйăрлаймастăн, çаплах тасататăн?—сăмах хушрĕ юлташĕсенчен пĕри.

— Мана кивĕ пăшал лекнĕ, ача, кĕпçи те, приклачĕ те шăйрăлса пĕтнĕ,—вăрăммăн сывласа илчĕ Сантăр.

— Вăл пăшал лекнĕшĕн савăнмалла çеç сан, а эс кулянатăн,—сиксе тăчĕ сĕтел хушшинче кĕнеке вуласа ларакан Коля Пегов. Пегов Хĕрлĕ Çарта икĕ çул пурăннă, халь ĕнтĕ вăл служба срокне тултарса киле кайма хатĕрленет. Пегов паян хăйĕн пăшалне пĕтĕм строй умĕнче Сантăра панă. Пегов сăмахне илтсен Сантăра аван мар пек пулчĕ.

— Пегов юлташ, çук-ук, эп пăшăрханмастăп, анчах çĕнĕ пăшал панă пулсан тата лайăхрах пулмалла вĕт-ха,—терĕ Сантăр, чĕтрекен сассипе.

Коля хуллен кулса илчĕ, пиçиххине тӳрлетсе çыхрĕ, кăкăрĕ çинчи орденне майларĕ те:

— Çамрăк-ха эсĕ, Иванов юлташ, Çарта пăртак пурăнсан кашни хĕçпăшалах мĕнле хисеплине пĕлсе çитетĕн,—хĕрсех калаçма пуçларĕ вăл. Çамрăк боецсем ăна сăрса илчĕç.

— Сана панă пăшал вăл—хисеплĕ пăшал,— çак сăмахсемпе пуçласа ячĕ Коля Пегов хăйĕн калавне.

Ун чух январьти сивĕ каçчĕ. Çанталăк тăрă та уярччĕ. Хĕллехи çил те ӳлесе вĕрместчĕ. Сайра-хутра çеç лăс пусса илнĕ йывăççем шартлама сивĕпе çурăлатчĕç. Пирĕн рота, икĕ эрне çапăçнă хыççăн, пĕр каçлăха тыла канма тухнăччĕ. Эпир пурте тĕксĕм землянкăра ыйăха путрăмăр. Юнашар землянкăра çурта йăмăхса çунать. Унта рота командирĕ, ыйăха пĕлмесĕр, çинçе шĕвĕртнĕ карандашпа хулăм хут çине пăнчăсем лартать, унтан линейка тăрăх карандаш вĕçĕпе чĕрсе йĕрсем йĕрлет. Вăл П. утрава разведка тумалли план ӳкерет. Планне ӳкерсе çитерсен, вăл ăна тепĕр хут тĕплĕ пăхса тухрĕ те Петя Волгинпа мана чĕнсе илчĕ.

Эпир, часах сиксе тăтăмăр та ыйăхлă куçсене сăтăрса, ун патне пырса тăтăмăр.

— Ларăр, юлташсем!—терĕ вăл, хăмаран

çапса тунă тенкелсенĕ кăтартса. Унтан пÿрнипе хăй ÿкернĕ планне йĕрлесе илчĕ.

— Сирĕн П. утрав çине разведкăна каймалла. Тăшманăн укрепленийĕсем ăçта вырнаçнине сăнаса пĕлмелле, акă сире план,— терĕ вăл, хут таткине мана тыттарса. Вăл пире планпа тĕплĕн паллаштарчĕ, хăш çулпа каймаллине, килмеллине каларĕ.

— Сирĕн умăрта пит пысăк задача тăрать, ку ĕçе тăвассишĕн, кирлĕ пулсан, пуçăра та ан хĕрхенĕр,—терĕ вăл, пирĕн алăсене хытă чăмăртаса.

Эпир, командир ăшшăн ăсатнипе хумханса, землянкăран тухса вăрманалла кĕрсе кайрăмăр.

Тексĕм вăрман. Кашни утăмра путăк-çурăк, чулсем, тĕмескесем. Утма йывăр пулсан та, кĕске вăхăтрах, икĕ километр малалла кайрăмăр.

Пĕчĕк уçланкăна тухсан сивĕ çил касса кайрĕ. Тÿпе тата та тĕксĕмленчĕ. Сайралнă хыр йывăççисем кашлама пуçларĕç, вĕсем çилпе силленнĕ май йывăç тураттисем çинчен юр муклашкисем тĕпрене-тĕпрене анаççĕ.

Тарăн юр тăрăх утма йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырать. Противник курасран упаленме пуçларăмăр. Упалене-упалене утрав хĕррине çитрĕмĕр. Умра татах чăрмав. Финсем, танксем ан каçчăр тесе, пысăк шă-

тăксем алта-алта хунă. Шăтăк стенисене йывăçпа, чулпа купаласа çирĕплетнĕ. Вĕсем тăрăх урлă-пирлĕ пралук карса пĕтернĕ. Шăтăксен леш енче гранит надолбисем мăкăрăлса тăраççĕ. Йывăç куписем халь-халь минăсемпе, фугассемпе шартлатса çурăлса каяссăн туйăнса ӳт-пĕве çӳçентереççĕ. Эпир çак урлă-пирлĕ каркаласа пĕтернĕ тăшман „капкăнĕсене" çĕнтерсе утма çул çине упаленсе тухрăмăр та, мĕн сăнанă укреплениесене картă çине ӳкерсе, утрав еннелле утрăмăр. Утрав çинче шăп, çул çинче те пире никам та тĕл пулмарĕ. Финсем пурте вилсе пĕтнĕ темелле, ăçта кайса кĕнĕ вĕсем, ыйтатпăр хамăртан хамăр.

— Вĕсем арлансем пек шăтăксенче лараççĕ, пире курсан, çавăрса илме пултараççĕ,— тет мана Петя.

— Эпир вĕсен укрепленийĕсем ăçта вырнаçнине сăнаса пĕтертĕмĕр, атя каялла,— терĕм эп ăна.

Унччен те пулмарĕ, çывăхра юр качăртатнă сасă илтĕнсе кайрĕ. Эпир хырăм çине выртса пĕр пысăк чул хыçнелле шума пуçларăмăр. Пĕр пилĕк минут пек выртсан, эпир тин çеç пăрăннă утма çул тăрăх виçĕ хĕçпăшаллă йĕлтĕрçĕ пирĕн еннелле шунине курах кайрăмăр.

— Финсен дозорĕ,—систертĕм эпĕ юлта-

ша. Петя вĕсене курсан пĕрре шуралса, теппе хĕрелсе кайрĕ те винтовкине хăй çумне хыттăн чăмăртаса тытрĕ.

— Атя, Коля, пеме пуçлар, çывăха ярас мар вĕсене,—хăй сăмахĕсене каласа пĕтереймерĕ вăл, пăшал сасси сивĕ сывлăша çурса та кайрĕ. Малта пыракан лыжник тӳрех ахлатса сылтăм урине ярса илчĕ те йăванса кайрĕ. Эпĕ вăл хушăра автоматпа хыçалта пыракан йĕлтĕрçĕсем çине персе ятăм. Вĕсене лекрĕ-и, лекмерĕ-и—пăхмасăрах, каяллла шума пуçларăмăр. Пирĕн тĕп задача—разведкăра тупнă сведенисене командир патне çитересси. Çав майпа эпир васкасах каяллла шăватпăр. Анчах, пирĕн çине çумăр çунă пек пуля тăкăнма пуçларĕ. Ăçтан, хăш енчен, миçе çын переççĕ,—нимĕн те чухласа илме çук. Белофинсем шăтăксенчен сиксе тухса пире ĕнтме тытăнчĕç пулас. Эпир васкасах чăтлăха кĕрсе пытантăмăр. Вĕсем эпир ăçталла чакнине сăнанă мĕн. Пульăсем çаплах пирĕн пуç тăрăх йывăçсем хушшипе шăхăрса иртеççĕ.

— Халь çăлăнтăмăр ĕнтĕ,—терĕм эпĕ, автомата авăрласа.

Эпир пĕр тĕмеске хыçне ӳпне выртса тăшман еннелле вут тăкма пуçларăмăр. Петя ман хăй винтовкине вĕççĕр-хĕрсĕр авăрласа тăшман пуçĕсем тăрăх кĕрст те кĕрст ту-

тарать. Эпĕ те автоматран вĕççĕр-хĕрсĕр шатăртаттаратăп. Финсем лăпланас вырăнне тата вăйлăрах пеме пуçларĕç. Эпир—иккĕн, вĕсем—çĕре яхăн пулĕ. Петя, хамăр вырнаçнă тĕмеске тăшман пульлинчен шанчăксăр сыхланине туйса, чул муклашкисем еннелле упаленме пуçларĕ. Эпĕ те ун хыççăн каяс тесе чĕркуçленнĕччĕ, аскăн пуля ман алăри автомата лексе пăшал кĕпçине сĕлĕ пĕрчи пек ватса та пăрахрĕ. Эпĕ юр ăшне чаваланса кĕтĕм те, сивĕпе кӳтнĕ алăсемпе Петя еннелле тарăн юра кушак пек чăрмаласа упаленме пуçларăм.

Куçа чарса пăхрăм. Пăхрăм та Петя чул муклашкисем патĕнче ним хускалми выртнине курах кайрăм. Пирĕн телее, противник те, хамăр пеме чарăннăран пулас, шăпланчĕ. Те вăл пире хупăрласа илме шутласа, вăрмана кĕрсе кайрĕ,—паллă мар.

— Петя, амантрĕç-им сана?—упаленнĕçем сас патăм эпĕ. Ун патне шуса çитрĕм. Унăн кăвакарса кайнă сăн-питне курсан çӳçенсе илтĕм. Петян шурă халачĕ витĕр юн юхса кĕвелсе ларнă, те ман сасса илтрĕ вăл, те питĕ асапланнипе, хаяррăн йынăшма пуçларĕ. Эпĕ ăна ыталаса илтĕм те, „хытă амантрĕç-и сана?“ тесе тепĕр хут ыйтрăм.

Вăл типсе ларнă тутисене хускатрĕ те:

— „Ил ман пăшала, сывă пул“,—терĕ.

Ун çăварĕнчен хĕрлĕ юн палкăса тухрĕ. Вăл ман çинелле йăшшăн та асаплăн пăхса илчĕ те хăйĕн çаврака хăмăр куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупрĕ. Эпĕ ун пăшалне илсе ложа çинчи юн тумламĕсене юрпа сăтăрса тасатрăм та çурăм хыçне çакса ятăм. Йĕри-тавра çаврăнса пăхатăп: шăп, ним сас-чӳ те çук. Противник, эпир вилсе пĕтнĕ пулĕ тесе, аяккалла кайрĕ пулас. Эпĕ çакна шухăшласа илсе лăплантăм та Петя çине пăхса тарăн шухăша путрăм.

— Мĕн тăвас Петяпа, кунтах пытарса хăварас-и е ун ӳтне çĕклесе каяс,—çак шухăш мана чĕререн хускатрĕ. Анчах разведка сведенийĕсене командир патне вăхăтра çитермелле. Çавăнпа эпĕ пĕчĕк кĕреçепе чул муклашкисем хушшинчи тарăн юра чавса шăтăк алтрăм та унта Петяна майласа выртартăм. Ман ӳт вут хыпнă пек сăрăлтатма пуçларĕ. Эпĕ Петя масарне витме тесе, кĕреçе тытасшăн, алăсем пымаççĕ. Аран аран алăпа чăрмаласа Петян ӳтне юрпа витрĕм те ун винтовкине илсе землянка еннелле васкаса утрăм. Тул çутăлса килет. Тăваткăл пĕлĕт хыçĕнчен хĕрелсе тухакан хĕвел шевлисем палăрма пуçларĕç. Эпĕ ыйхăллă та куççуллĕ куçсене сăтăрса илтĕм те часах землянка таврашĕнчи хырлăха курах кайрăм.

— Стой! Кто идет?—тенĕ сасă мана шар-

тах сиктерчĕ. Часах мана хамăра шырама тухнă икĕ боец ыталаса илчĕç.

— Петя ăçта?

Вĕсене хирĕç эпĕ нимĕн те чĕнеймерĕм. Землянкăна çитсен мана лейтенант ыталаса илчĕ. „Эсĕ ăмăрткайăк!" кăшкăрса ячĕ вăл. Анчах эпĕ Петя винтовкине тытса тăнине курсан, лейтенант иккĕленчĕклĕ сасăпа „Волгин ăçта?" теме пуçларĕ. Эпĕ разведкăна мĕнле кайса килнине йĕркипе каласа патăм. Пурте шлемсене хывса, пĕр минут чĕнмесĕр тăрса, Петяна асăнтăмăр. Вăл вăхăтра лейтенантăн куçĕсем шывланни мана татах та хурлантарчĕ. Анчах ун чух нумай хурланса тăма вăхăт пулмарĕ. Разведка сведенисене илсенех лейтенант çапăçăва кайма, утрава çавăрса илме приказ пачĕ.

— Ку çапăçура пĕр Волгин герой вилĕмĕшĕн кашни красноармеец вунă белофина çапса вĕлермелле,—терĕ паттăр командир.

Унăн хĕрӳллĕ сăмахĕ пире вутлă вăрçа тухса кайма хавхалантарчĕ, хумхантарчĕ.

Приказ панă хыççăн лейтенант ман пата пычĕ те:

— Пегов юлташ, эсир канăр, старшинапа эсир утрав çине кайран, лавпа пыратăр,— терĕ.

— Лейтенат юлташ, Петя вилĕмĕшĕн ун

пăшалĕпе тăшмана таварма ирĕк парăр мана,—терĕм эпĕ.

Эпир кашниех юлашки юн тумламĕ тухиччен çапăçма хатĕррине курсан, пирĕн командир питĕ савăнчĕ. Вăл вăхăтра артиллеристсем çĕр çĕмĕрттерсе утрав çине снаряд хыççăн снаряд яма пуçларĕç. Эпир атакăна кайма утрав çывăхĕнче позицисем йышăнтăмăр. Пирĕнтен инçе мар артиллеристсем пенĕ снарядсем кĕрслетсе çуралаççĕ. Вĕсем ӳкмессерен тимĕр, бетон, пралук, юрлă тăман пурте пĕрле пăтранса пĕлĕте хупăрласа илеççĕ. Эпĕ винтовкăна чăмăрта-чăмăрта малалла ӳпĕнетĕп.

— Тăхта, Пегов, командăсăр пĕр утăм та малалла ан пус,—тет мана отделени командирĕ. Чун чăтмасть, ним тума аптранă енне штыка сăтăрса якататăп.

— На врага, в атаку!—уçă сасă çĕклентерсе ярать пире. Эпир, пĕр харăссăн сиксе тăрса, тăшманăн çĕрпе хутшăннă укреплениййĕсем çине сиксе кĕретпĕр. Белофинсен юлашкийĕсем, шăтăксенчен сике-сике тухса, пире хирĕç пулеметсенчен, автоматсенчен пеме пуçлаççĕ. Эпир, утрав йĕри-тавра юр çине окопсем чавса, тăшмана пур енчен те вутпа ĕнтме тытăнатпăр. Çапăçу шăп çичĕ сехете пычĕ. Ман алăра Петя винтовки пĕр чарăнми ĕçлерĕ. Кашни тĕллесе пемессерен ун

кĕпçинчен çиççе тухăкан пуля белофинсене шур юр çине çĕкле-çĕкле çапрĕ. Юлашки хут атакăна кайсан пĕр бандитне штыкпа чиксе пăрахма та телей тиврĕ мана.

Ку çапăçура эпир пĕтĕм утрава тата пĕр ДОТ-а илтĕмĕр. ДОТ-а мĕнле илни çинчен плена лекнĕ унтер-офицер, вилессе сиссе пуль, дневникĕ çине çапла çырса хăварма ĕлкĕрнĕ: „Нимрен те ытла хĕрлисем артиллерирен пенĕ чух питĕ хăрушă пулчĕ. Пĕр сехет хушши эпир ДОТ-ра пĕр хускалми выртрăмăр. Никам та нимĕн те чĕнмерĕ. Масарти пек шăпланчĕ пирĕн крепость. Кашни хăйне хăй чĕрĕллех çĕре кĕнĕн туйса выртрăмăр. Акă артиллерирен пеме чарăнчĕç. Пĕр минут иртсен эпир çăмăллăн сывласа ятăмăр. Унччен те пулмарĕ, вырăсла калаçнă сасăсем илтĕнме пуçларĕç.

— Пире хупăрласа илнĕ,—çак шухăшпа кашни çӳçенсе кайрăмăр. Пирĕнпе пĕрле юлнă пĕртен-пĕр офицер (ыттисем хĕрлисем артиллерирен пеме пуçласанах тарса пĕтнĕ) пире ДОТ-ран тухса хĕрлисемпе çапăçăва кĕме сĕнчĕ. Анчах ăна никам та итлемерĕ. Офицер пире, час подкреплени килет, ан хăрăр, пире хамăрăннисем хăтараççех, тесе йăпатма пуçларĕ. Пиртен кашни ДОТ-ăн хулăм бетон стенисем çăласса çеç шанса лăпланма пуçларĕ. Унччен те пулмарĕ, çĕр кис-

ренсе чĕтресе кайрĕ. Лампа сӳнсе ларчĕ. Эпир маччари пысăк ҫавракa шăтăка курса шарт сиксе пĕр-пĕрин ҫумне ним чĕнми ҫыпăҫса лартăмăр. Пирĕн пăшалсене пăрахса хĕрлисене парăнма лекрĕ".

Унтер-офицер дневникĕ ҫинчен каласа пĕтерсен Коля вăрăммăн сывласа илчĕ. Вăл татах хăйĕн юратнă юлташне Волгина аса илчĕ те ун ҫинчен калама пуҫларĕ.

— Ҫапăҫу пĕтсен эпир Петя масарĕ ҫине кайрăмăр,—терĕ вăл, сассине хурлăхлăн пусарса.—Эпĕ Волгин ҫине витсе хăварнă юр тĕмене сиртĕм те унăн хытса кайнă ӳтне ҫĕклесе кăлартăм.

— Вилес пулсан Петя пек хисеплĕ те паттăр вилĕмпе вилмелле,—терĕм эпĕ, юлташсем еннелле ҫаврăнса. Мана хирĕҫ никам та чĕнмерĕ. Боецсем шывланнă куҫĕсене шăлса илчĕҫ те пĕр вăрăм хыр ҫумне шăтăк чавма пуҫларĕҫ. Эпир ăна сăрта, илемлĕ вырăна тирпейлесе пытартăмăр. Ун масарĕ ҫине юман йывăҫран пысăк юпа лартрăмăр та ун ҫине: «Здесь похоронен герой-разведчик Петя Волгин»,—тесе ҫырса хутăмăр.

Кун хыҫҫăн тата та нумай хĕрӳллĕ ҫапăҫусенче пулма лекрĕ мана. Эпĕ Петян хисеплĕ винтовкине мĕн тăшмана аркатса тăкичченех алăран ямарăм. Вăл ман пурăнăҫа ҫăлма ҫеҫ мар, белофинсене тĕпрен аркатма та пу-

лăшрĕ,—терĕ те Пегов, кăкăрĕ çинчи «Хĕрлĕ Ялав» орденне пăхса илчĕ. Унтан вăл чылайччен тарăн шухăша кайса тăчĕ. Вăл хушăра Сантăр Иванов кĕтмен çĕртен хăй винтовкине йăтса килчĕ.

— Пегов юлташ,—терĕ вăл, чĕтрекен сассипе, хăйĕн «кивĕ» винтовкине чăмăртаса тытса.—Эпĕ... эпĕ те... Волгин пекех, сан пекех ку винтовкăпа тăшмана çĕмĕретĕп...

Боецсем пурте Сантăр винтовки çине кусĕсене хыврĕç. Вĕсенче кашнинчех çак чаплă пăшала тытса усрас, унпа çапăçăва кĕрес шухăш хыпса илчĕ.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Сантăр Иванов, ун чухнехи пекех, ир те, каç та хăй пăшалне тĕплĕ тасатса, пирамидăна тăрататть. Вăл унпа отлично пеме тата штыкпа чикме вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ, çавăнпа та вăл подразделенире тава тивĕçлĕ боецсен хисепĕнче шутланса тăрать.

## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Умсăмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Артиллеристсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Паттăр разведчик . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Фронтри патриотка . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Снайпер Ковкин . . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Разведкăра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47
Хисеплĕ пăшал . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55

КНИГОХРАНИЛ
ЦАУ. ЧАССР
Инвент. № 105

Редактор А. Эсхель.

Зак. № 336. Тир. 3000 экз., авт. л. 2, печ. л. 2,12. НТ 2725.

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. Издательств и полигр. при СНК ЧАССР.

2
O.I.K.

**Цена 1 руб. 20 коп.**

КНИГОХРАН
105

Ф. СИТТА

ФРОНТОВЫЕ РАССКАЗЫ

Госиздат ЧАССР
1941